www.tavanen.ru

Тăван Ен

плюс Причебоксарье

Алăкран шаккать почтальон ▶ 12

Вăрттăнлăхри БМП
АСА ИЛ-ХА, САЛТАК! ■→ 4

Салтака – курорта кайнă пек
ПАТРИОТ ■→ 5

Хими учителĕ – артист
ШУПАШКАРТ ■→ 9

№ 26 • (10569-10570) • ИЮЛĔН 7-МĔШĔ • 2017 • ЭРНЕКУНСЕРЕН ТУХАТЬ • Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

Икçĕр çул ытла упранакан чăваш тумĕллĕ Журавлевсем

Паян та мăшăрне «чиперкке» тесе чĕнет

• КАЛЕНДАРЬТИ КУН

Июлĕн 8-мĕшĕнче Раççейре Юрату, çемье тата шанчăклăх кунне паллă тума йышăннă. 13-мĕш ĕмĕрте пурăннă Муром княçне Петра тата унăн мăшăрне Февроние халлланă ăна. Вăл паян чи сăваплă уявсенчен пĕри пулса тăчĕ. Çак кун тĕслĕхлĕ çемьесене чыслаççĕ.

Чечек çыххипе кăмăлне çавăрнă

Юратупа шанчăклăх, пĕрпĕрне ăнланса хисепленин никĕсĕ çинче чăмăртаннă çемье чи çирĕппи шутланать. Тарăн та çирĕп туйăмсем кăна йывăрлăхсене чăтса ирттерме, вăйлăрах та ăслăрах пулма пулăшаççĕ. Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕнчи Смирновсен, Апаш ял тăрăхĕнчи Павловсен тата Сарапакасси ял тăрăхĕнчи Журавлевсен çемйисене шăпах çакăн пеккисен шутне кĕртме пулать, вĕсене паян «Юратупа шанчăклăх» медальпе чыслаççĕ.

Шорккари Владимирпа Александра Журавлевсен çемье стажĕ – 43 çул. Çемьери пурнăç урапине нумай çул пĕрле тытса пыракансем килĕшӳре пурăнаççĕ, ашшĕамăшне сума сăвакан ачасем пăхса ӳстернĕ. Александра Максимовна яланах мăшăрĕпе юнашар, ăна кирлĕ самантсенче пулăшса, хавхалантарса тăраканнĕ. Мăшăрĕ пурнăç тăршшĕпех пĕлӳ илессишĕн тăрăшнă, çав вăхăтра килти ĕçсене пурнăçласси, 5 ачине пăхасси ытларах этемлĕхĕн черчен çуррийĕн хулпуççийĕсем çине тиеннĕ. «Ялти тата Çатра-Хочехмат шкулне пĕтерсен Шупашкарти пĕр училищĕре каменщик профессине алла илтĕм, унтан стройкăра 2 çул вăй хутăм. 19 çулта салтак атти тăхăнса 3 çул авиаци çарĕнче службăра тăтăм. Унтан таврăнсан каллех стройкăра ĕçлерĕм, çав вăхăтрах каçхине тĕп хулари машиностроени техникумĕнче вĕрентĕм. Хурçă шăратакан пулма тĕллевленĕччĕ. Ватăлса

> Пĕтĕмĕшле шутласа пăхрăм та – эпĕ хам пурнăçăмра 33! çул вĕреннĕ!

пыракан атте-анне тăван яла таврăнма ӳкĕте кĕртрĕç, ялта кирлĕ професси алла илес тесе строительство техникумне вĕренме кĕтĕм. Ăна пĕтерсен малтан Шупашкарти, кайран Кӳкеçри пĕр предприятире техник-строительте ĕçлерĕм», – сӳтет аса илӳ çăмхине çемье пуçĕ. Шăпах çавăн чухне пулас мăшăрĕпе, Вăрмар хĕрĕпе Александрăпа паллашать те 27 çулти каччă. Тăванĕсем авланма вăхăт çитнине аса илтерсех тăни те, хĕр кăмăла кайни те хăюллăрах утăмсем тума хистеççĕ ăна. Çак тăрăхри хĕрюлташĕ каччăна ырланипе те яш çине тимлĕрех пăхать Вăрмар хĕрĕ. «Нумай калаçатчĕ пулсан та, вăхăт иртнĕ çемĕн йĕркеллĕ каччă пулнине ăнлантăм. Чечек çыххипех кăмăла çавăрчĕ пулас. Чечекĕсем те туяннăскерсемех пулнă, те такам пахчинчен вăтăрса тухнисем», – шӳтре чăн-чăн туйăмĕсене пытарни сисĕнчĕ Александра Максимовна сăмахĕсенче.

«Ялти хунькасси вăл – чăмăрла çĕр улми, уй урли – месерле çăмарта», – тесе вĕрентнĕ иккен асламăшĕ Владимир Андреевича мăшăра аякри ялсенче шырама сĕнсе.

↪4

САМАХ МАЙ

Районти ЗАГС уйрăмĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, Çеттуй Петрпа Феврони кунĕнче 7 çамрăк мăшăр çемье çавăрма кăмăл тунă.

• ÇĔРШЫВРА

Тĕрĕслевпе асăрхав службине реформăласси, вĕсен ĕç-хĕлĕпе çыхăннă тĕп программăна тĕплĕн сӳтсе явасси РФ Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев юнкун ирттернĕ видеоканашлу тĕп теми пулнă. Унăн ĕçне Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисемпе, федераци службисен регионти уйрăмĕсен пуçлăхĕсемпе хутшăннă. Селектор канашлăвĕнче РФ Правительствин Председателĕ 2018 çулта асăрхавпа тĕрĕслев службисен мероприятийĕсене ытларах чухне хăрушлăхрисен тĕлĕшпе йĕркеleме сĕннĕ, плансăр тĕрĕслевсем вырăнсăррине палăртнă. «Ĕç тухăçлăхне предприятисемпе организацисем е муниципалитетсем штраф тӳленине кура кăна хакламалла мар, – тенĕ вăл. Тĕрĕслев мероприятийĕсене ирттернĕ чухне информаци технологийĕсене, фото, видеосăнав хатĕрĕсене анлăрах усă курма сĕннĕ.

• РЕСПУБЛИКĂРА

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер Чăваш патшалăх филармонийĕнче Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне халлланă савăнăçлă мероприятие хутшăннă. Уявра Чăваш Республикин Указĕпе килĕшӳллĕн, çемье институтне çирĕплетес тĕлĕшпе тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн 130 çемьене «Юратупа шанчăклăхшăн» орденпа наградăланă. Ĕç династийĕсем пирки те аса илнĕ. Вĕсене кăçалхипе 14-мĕш хут чыслаççĕ. Республикăра вĕсем пĕтĕмпе пине яхăн.

Июлĕн 4-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Республикăра коррупцие хирĕç кĕрешессипе тимлекен координаци Комиссийĕн черетлĕ ларрăвне ирттернĕ. Видеоканашлу мелĕпе йĕркеленĕ мероприятие Чăваш Енри хула тата район администрацийĕсен пуçлăхĕсем хутшăннă. ШĔМ-ĕн экономика хăрушсăрлăхĕпе тата коррупцие хирĕç кĕрешессипе ĕçлекен управленийĕн пуçлăхĕ Андрей Семенов служба кăçалхи 5 уйăхра коррупци енĕпе йĕркене пăснă 42 тĕслĕхе шута илнине, вĕсенчен 38-шĕпе уголовлă ĕç пуçарнине пĕлтернĕ.

Йĕркене пăсакансене, саккуна пăхăнманнисене тупса палăртасси тĕп ыйтусенчен пĕри шутланнине палăртнă Михаил Игнатьев. Пуçлăх нормативлă право ĕç хучĕсене çирĕпрех йышăнса хăварма, бюджет укçи-тенкипе тухăçлă пĕлсе усă курма, патшалăх туянăвĕсене ирттернĕ чухне мĕнпур саккуна çирĕп пăхăнма хушнă.

«Тăван Енсĕр» тăвансăр пекех

Альбина ИШОВА,
Çĕнĕ Тутаркасси

www.tavanen.ru Июль 7 - 13, 2017 Таван Ен № 26 (10569-10570)

Валентина МАТВИЕНКО,
РФ Федераци Канашĕн Председателĕ:

– Чăваш Республики – Раççей Федерацийĕн вăйлă промышленноçлĕ тата ял хуçалăх комплексĕллĕ субъекчĕ. Сирĕн ентешсен ăрăвĕсем çĕршыв промышленноçĕн тĕрекне çирĕплетес тесе хастар ĕçленĕ, паянхи ăнăçусем валли тĕплĕ никĕс хывнă... Республика çыннисем мăн асатте-асаннесен йăли-йĕркине малашне те упраса региона чечекленме пулăшасса иккĕленместĕп.

ИНВЕНТАРИЗАЦИ

ПУШĂ ÇУРТСЕМ ПИРКИ ПĔЛТЕРМЕ ВАСКАÇÇĔ

Республика Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн Патшалăх Канашне янă Çырăвне пурнăçласа Чăваш Енре усă курман куçман пурлăх хуçисене палăртас тĕллевпе пуçарнă «Халăх инвентаризацийĕ» акци малалла пырать.

Çак эрне пуçламăшĕ тĕлне Шупашкар районĕнче куçман пурлăхăн усă курман 24 объектне тупса палăртнă. Вĕсенчен 7-шĕ – муниципалитет харпăрлăхĕнче, 10 – уйрăм çынсен, 7-шĕн пушшех те хуçисем çук. Райадминистрацин экономика, пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕнчен çак объектсенчен тăваттăшĕ тĕлĕшпе граждансен çыру йĕрĕпе тĕрĕслевсем пуçарнине пĕлтерчĕç. Ял илемне пăсакан çуртсемпе кам кăмăллă-ши? Акцие кирек кам та хутшăнма пултарать. Хуçасăр, пушă е пачах усă курман объектсем пирки хыпарсене çак адреспа йышăнаççĕ: Чăваш Республики, Кӳкеç поселокĕ, Шоссейная урам, 9-мĕш çурт, 5а пӳлĕм. Телефонпа та шăнкăравласа пĕлтерме май пур: 8(83540) 2-50-77, электрон адреспа çырса та: checonom4@cap.ru.

УЯВ САЛАМĔСЕМ

Михаил ИГНАТЬЕВ,
Чăваш Республикин Пуçлăхĕ

Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

Сире Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Çемье, юрату тата шанчăклăх пирĕн пурнăçа паха пĕлтерĕшпе пуянлатаççĕ, вĕсем çын телейĕн никĕсĕ. «Çемье – тăнăçлăх вучахĕ», – тесе палăртать халăх ăсĕ.

Республикăра пурăнакансем çемье йăлисене хисеплеççĕ тата вĕсене ăруран-ăрăва куçарса пыраççĕ.

2017 çула Чăваш Енре Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ. Эпир çемье членĕсенчен кашнийĕ хăйĕн пĕтĕм вăй-халне тата чун тараватлăхне шеллемесĕр тăрăшса, пĕрне-пĕри ăнланса тата тăтăшах пулăшса пырса кăна çирĕп çемье çавăрма пулнине пурне те аса илтерес тетпĕр.

Çак уяв кунĕнче мăшăрсене çемье йăлисене çирĕп тытса пынăшăн тата ачасене тивĕçлĕ воспитани парса ӳстернĕшĕн чунтан тав тăватăп.

Пурне те ырлăх, çирĕп сывлăх тата килĕрте ытлăх-çитлĕх сунатăп! Кашни çемьере яланах савăнăç, ача кулли, юрату, пĕр-пĕрне сума суни тата килĕшӳлĕх хуçаланччăр!

Почта çыхăнăвĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!

Раççей почтин кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламланине йышăнсамăр!

Раççей почтин Чăваш Енри филиалĕнче виçĕ пине яхăн ĕçчен вăй хурать. Сирĕн тăрăшулăхăра пула почта уйрăмĕсен тытăмĕ йĕркеллĕ аталанать, пулăшу ĕçĕсен тĕсĕсем йышлăланаççĕ.

Кăçал черете тытса пыма пулăшакан тытăма ĕçе кĕртессипе çыхăннă проект пурнăçланать, оборудование тата программа тивĕçтерĕвне çĕнетмелли анлă ĕç вĕçленет. Логистикăпа технологи процесĕсене лайăхлатни почтăпа яракан япаласен ӳссе пыракан калăпăшне туллин пурнăçлама тата кӳрекен пулăшу ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатма май параççĕ.

Чăваш Енре Раççей почти хаçат-журнал салатакан тĕп тытăм шутланать. Хаçат-журналпа тивĕçтерсе тăрас енĕпе республика Раççейре 7-мĕш вырăн йышăнать.

Почта çыхăнăвĕн ĕçченĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлакан ĕçĕшĕн чунтан тав тăватăп.

Сире тата сирĕн çывăх çыннăрсене чун-чĕререн çирĕп сывлăх тата ырлăх сунатăп!

• ХЫПАР-ХĂНАР

ЯЛ ХУÇАЛĂХ ТАВАРНЕ ТУСА ИЛЕКЕНСЕМ 2017 ÇУЛХИ ИЮЛЬ УЙĂХĔНЧЕ 9 МЛРД ТЕНКĔ ХУШМА ПУЛĂШĂВА ШАНМА ПУЛТАРАÇÇĔ – çакăн çинчен пĕлтереççĕ республикăн ял хуçалăх министерствин сайтĕнче. Раççей ял хуçалăх министерстви хушма пулăшăва регионсене çак уйăхрах çитерме пултарать. Субсидисем ял хуçалăх таварне туса кăларакансене çăмăллăхлă инвестици кредичĕсемпе тивĕçтерме тата ял хуçалăх отраслĕн проекчĕсене йĕркелеме тата модернизацилеме усă курнă тăкаксен пĕр пайне саплаштарма кайĕç.

Пĕтĕмĕшле ял хуçалăх отрасльне аталантарма 215,9 млрд субсиди уйăрма палăртнă, 2016 çулта вара çак виçе кăшт нумайрах пулнă – 220 млрд.

Çĕнĕ йышши техника, ăратлă выльăх-чĕрлĕх...

Пĕтĕм Раççейри уй-хир кунĕнче курмалли чылай пулчĕ

• ФОРУМ

Çак кунсем ял хуçалăх ĕçченĕсемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулăмпа асра юлчĕç – июлĕн 5-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри уй-хир кунĕ иртрĕ. Кăçал хăнасене Тутар Республики кĕтсе илчĕ. Уява тĕрлĕ регион представителĕсем хутшăнчĕç, çав шутра Чăваш Ен делегацийĕ те.

В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕ

Шупашкарьенсем юрлама та ăста

Кăсăкли нумай

60 га лаптăк çинче ура ярса пуссанах чылай тĕлĕнмелли куç умне тухать: регионсен хăйнеевĕрлĕ картишĕсем, çĕнĕ йышши хăватлă ял хуçалăх техникисем, тĕрлĕ сортлă тыр-пул тата пахча çимĕç ӳсекен лаптăксем, ăратлă выльăх-чĕрлĕх. Унсăр пуçне форум программинче – çавра сĕтелсем, конференцисем, канашлусем, семинарсем, мастер-классем. Ял хуçалăхĕнче вăй хуракан кашни çын кунта хăйне кăсăклантараканнине тупатех.

Чăваш Ен делегацийĕ йышĕнче ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов та пулчĕ. «Тутар республикинчи Пĕтĕм Раççейри уй-хир кунне Чăваш Ен делегацийĕ те, çав шутра 13 район çыннисем тата предприятисем хутшăнаççĕ. Эпир хăнасене чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе, культурипе, апат-çимĕçĕпе паллаштаратпăр. Кунта чăваш наци апат-çимĕçне – шăрттанне те, чăкăтне те, сăрине те тутанса курма, йăла-йĕркепе – хăмла туса илнипе, сăра пĕçернипе, утă çулнипе тата ыттипе паллашма пулать. РФ ял хуçалăх министрĕ Александр Ткачев хутшăннипе иртекен çавра сĕтелте кăçалхи çăмăл мар лару-тăрура, пĕрмаях çумăр çуса тăнă вăхăтра, ял хуçалăх ĕçĕсене пурнăçлас ыйтусене сӳтсе явăпăр», – палăртрĕ вăл.

Чăваш йăли-йĕркине тĕпе хурса

Курава хутшăннă халăхсем хăйсен наци картишĕсене йĕркеленĕ. Чăваш Ен кил-картишĕ те хăйнеевĕрлĕхпе уйрăлса тăчĕ. Улатăрсем хăйсен кĕтесне утă çулса типĕтес, етĕрнесем – сăра вĕретес йăла-йĕркене халалларĕç. Йĕпреçсем йывăçран касса, ĕнтсе çунтарнă япаласемпе чăннипех те мăнаçлăх туйăмĕ çуратаççĕ – мĕнлерех ăстасем пурăнаççĕ пирĕн республикăра! Сĕнтĕрвăррисем карçинкка çыхас ăсталăхпа паллаштарчĕç, муркашсем пыл хурчĕ тытас ĕç-хĕле сăнласа пачĕç, хĕрлĕ чутайсем – паян тесен паян хăнасене мунча кĕртме хатĕр. Çакна пурнăçлама вĕсен пĕтĕмпех пур – унтах мунча кăмаки мăкăрланать, милĕксем çакса хунă. Вĕри мунча хыççăн чей вĕретмелли куръксем пирки те нумай пĕлеççĕ чутайсем. Куславкка тăрăхĕ вара мĕн авалтан пулă тытас ĕçпе мăнаçланать. Çавăнпах вĕсен кĕтесĕ те çак ĕçпех çыхăннăччĕ.

Шупашкарьенсем те маттур

Шупашкар район делегацийĕн йышĕнче – Апаш халăх театрĕн, Котеркассинчи «Шортан» фольклор ансамблĕн, Чăрăшкасси клубĕн «Миниарт» пĕрлешĕвĕн артисчĕсем, район администраци ĕçченĕсем. Район кĕтесне тăмран тунă статуэткăсемпе сувенирсем, сăн ӳкерчĕксен тата авалхи япаласен куравĕ, чăваш халăх кĕписемпе тухйисем, тырă пучахĕсен сыххисем илемлетрĕç. Чăваш тумтирĕллĕ хĕрарăмсем кантăр тылланине, пир хатĕрленине кăтартса пачĕç. Чăваш Ен картишĕ самантлăха та шăпланмарĕ, пултарулăх ушкăнĕсем ылмашăна-ылмашăна юрăсем шăрантарчĕç, такмакласа ташларĕç.

Чăваш тĕррин, наци костюмĕсен илемлĕхĕпе ăçта паллашма пулать? «Паха тĕрĕ» пир-авăр фабрикин кĕтесĕнче. Вĕсен экспозицийĕ чăваш тĕррисемпе илемлетнĕ чăваш халăхĕн ĕлĕкхи тата хальхи кĕписенчен, эрешĕсенчен, тухъясенчен тăчĕ. Галина Воронова ăстаçă кăмăл тăвакансене çавăнтах чăваш тĕррин вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарчĕ. Фабрика директорĕ Наталия Пасынкина пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра кăна тĕрĕ ăстисем республикăри 10 районти Акатуй уявĕсене хутшăннă, хăйсен экспозицийĕсене тăратнă. Çак канмалли кунсенчех Тутар Республикин Нăрлат районне çитме палăртаççĕ. «Эпир паян чăваш наци костюмĕсемпе Чăваш Ен кил-картишне илемлетрĕмĕр», – пĕлтерчĕ вăл хăйĕн шухăшĕсене. «Паха тĕрĕ» пир-авăр фабрикин чăваш тĕррисемпе илемлетнĕ кĕписене, ытти таварне республикăра кăна мар, пĕтĕм тĕнчипе аван пĕлеççĕ. Вĕсенче чăваш халăхĕн историйĕпе пуянлăхĕ сăнланать. Чăваш Ен делегацийĕн членĕсем РФ ял хуçалăх министрне Александр Ткачева тата Тутар Республикин Президентне Рустам Минниханова чăваш тĕрриллĕ шупăрсем парнелерĕç.

Чарăнма пĕлми çумăр, пĕр лăпланманскер, тепре витререн тăкнă пек çăваканскер, уяв кăмăл-туйăмне сӳтермерĕ. Чăваш Ен кил-картишĕпе ытти регион делегачĕсем те паллашрĕç, пысăк хак пачĕç. «Кун пек илемлĕ картиш урăх курмарăмăр, сирĕн чи-чи аванни», – çакăн пек сăмахсем чуна мĕнле хăпартмĕç?

ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ

ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ

Ветерансене тата инвалидсене реабилитацилекен «Вега» центрта канма путевка кĕтекенсен черетĕнче

635 çын

тăрать. 2016 çулта унта 67-ĕн каннă.

ЧĂВАШСТАТ ПĔЛТЕРНĔ ТĂРĂХ, кăçалхи 5 уйăхра регион 15668 çын пурăнма килнĕ, 16865-шĕ куçса кайнă. Миграци ӳсĕмне Шупашкарта регистрациленĕ, тĕп хуламăра 663 çын пурăнма килнĕ, Çĕнĕ Шупашкарта 124 çын никĕсленнĕ, Шупашкар районĕнче – 101 çын. Шупашкар районне 974 çын килнĕ, 873-шĕ тухса кайнă. ■

КĂÇАЛХИ ЯНВАРЬ-АПРЕЛЬ УЙĂХĔСЕНЧЕ Чăваш Енре иртнĕ çулти çак тапхăртипе танлаштарсан вăтам ĕç укçи 8,4% ӳснĕ, вăл 23592,1 тенкĕпе танлашать. Республика организацийĕсенче ĕçлекенсен вăтам списокĕнче – 316,3 пин çын, çакă – пĕлтĕрхи январь-апрель уйăхĕн 97,7%. Шупашкар районĕнче предпринимательствăн пĕчĕк субъекчĕсен шутне кĕмен организацисенче 8883 çын вăй хурать. Районта вăтам ĕç укçи 20408,7 тенкĕпе танлашать. ■

2020 ÇУЛ ТĔЛНЕ районта ĕçлеме пултаракан çул ӳсĕмĕнчи инвалидсен 50%-не ĕçе вырнаçтарма планланă. Кăçал районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр инвалидсен 35%-не ĕç вырăнĕпе тивĕçтерме тĕв тунă. Паянхи кун тĕлне сывлăх енчен хавшак 1329 çынран 278-шне ĕçе вырнаçтарнă. Ыттисене ял тăрăхĕсенче ĕççĕрлĕх сăлтавне пăхмасăрах обществăлла ĕçсене явăçтарĕç. ■

ПĔЛТĔР ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧИ халăха социаллă хӳтлĕх паракан центр регионти льготниксенчен йышăннă 494 заявленирен ытларахăшĕ уйăхсерен тивекен укçа-тенкĕ тӳлевĕпе, вырăнти телефон çыхăнăвĕн абонент линийĕпе (проводлă лини) усă курнăшăн тăкаксене саплаштарма ыйтнипе çыхăннă. Иртнĕ çулхи январĕн 11-мĕшĕнчен 924 ĕçлекен ĕç ветеранне уйăхсерен паракан укçа-тенке тӳлеме чарăннă, вĕсенчен 784-шĕ тӳлеве малалла та илсе тăрас тесе ĕçлеме пăрахни çинчен пĕлтерсе çырнă. ■

УЯВ САЛАМĔ

Шупашкар районĕн хисеплĕ çыннисем!

Сире Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕпе саламлатпăр!

Çемье – общество тĕрекĕ. Çитĕнсе пыракан ăрăва тĕрĕс воспитани парас яваплăх шăпах ун çине тиенет. Унăн йăлана кĕнĕ пуянлăхĕсене çирĕплетесси – патшалăх политикин тĕллевĕсенчен пĕри. Çирĕп те туслă çемьере кăна аслă ăрăва хисеплеме вĕрентес, пĕр-пĕрне пулăшас ырă пуçарусем тĕвĕленеççĕ, яваплăх çирĕпленет.

Андрей НИКОЛАЕВ, Шупашкар район пуçлăхĕ

Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне Раççейре 2008 çултанпа паллă тăваççĕ. Çемьери çураçулăхпа килĕшĕве упракан Петрпа Феврония çеттуйсем çинчен калакан легендăна аса илсе кашни çулах июлĕн 8-мĕшĕнче тĕслĕхлĕ, ятсумлă мăшăрсене чысласси йăлана кĕчĕ. Чăваш Республикинче çемье институтне çирĕплетессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çемье ăшшине чĕрĕк ĕмĕртен кая мар упракан, ачисене обществăна юрăхлă, тĕслĕхлĕ воспитани парса çитĕнтернĕ, çемье пахалăхĕсене тĕрĕс тытса пыракансене «Юратупа шанчăклăхшăн» медальпе паллă тăваççĕ.

Владимир ДИМИТРИЕВ, райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакаНĕ

Районта пурăнакансене пĕтĕм чун-чĕререн çемьере килĕшӳлĕх, юрату тата хурăнташсен хисепне сунатпăр.

Ⓟ 07-12

• ПРОКУРАТУРА ПĔЛТЕРЕТ

МЕДТĔРĔСЛЕВ ХЫÇÇĂН – РЕЙСА

Шупашкар район прокуратури «Чебо» компани ООО ĕç законодательствине пурнăçлани тĕлĕшĕ тĕрĕслев ирттернĕ. Обществăри Ford Transit автомобиль водителĕ рейс умĕнхи медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухманнине (2017 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнчи çул хучĕ) тупса палăртнă. РФ Ĕç кодексĕн 76-мĕш статйипе килĕшӳллĕн, ĕçе илекенĕн медицина тĕрĕслевне тухман кадрпа ĕç килĕшĕвне татмаллла.

РФ Ĕç кодексĕн 213-мĕш статйипе килĕшӳллĕн, ĕçлекенсен хăш-пĕр категорийĕ валли ĕç кунĕ (смена) пуçламăшĕнче, çавăн пекех кун тăршшĕнче тата вĕçĕнче медицина тĕрĕслевне ятарласа тухмалли йĕркене палăртма пултараççĕ. Кодексăн 212-мĕш статйипе хăрушлăхсăр условийĕсене йĕркелессипе тата ĕç сыхлавĕпе тивĕçтерессипе çыхăннă тивĕçсене ĕçе илекенĕн пурнăçламалла. Район прокуратурин тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх общество директорĕ тĕлĕшĕпе РФ КоАПĕн 5.27 статйипе (3-мĕш пай) ĕç пуçарнă, представлени тăратнă. Постановление пăхса тухнă хыççăн юлашкине 15000 тенкĕлĕх штрафланă. ■

• ХЫПАР-ХĂНАР

Июнĕн 29-мĕшĕнче Лапсар проездĕнче вырнаçнă предприятисенчен пĕрин цехĕнче вăй хуракана тимĕр-бетон плита шар кăтартнă. Ӳкнĕ май йывăр стройматериал 41 çулти хĕрарăм урине хĕстерсе лартнă, вăл перĕннĕ тепĕр плита та юнашар тăнă 38 тата 45 çулсенчи хĕрарăмсем çине йăтăнса аннă. Рабочисене виççĕшне те тĕрлĕ сурансемпе васкавлăн больницăна леçнĕ, медицина пулăшăвĕпе тивĕçтереççĕ. Çак инкек хыççăн Следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕнче Патшалăх ĕç инспекцийĕн специалисчĕсене явăçтарса следстви умĕнхи тĕрĕслевсене пуçарнине пĕлтерчĕç. ■

Ыйту-хурав

Тарифсем улшăнчĕç

Июль уйăхĕнчен шыв, ăшă, электричество тарифĕсем каллех улшăнасси çинчен пĕлтерчĕç. Тĕплĕнрех ăнлантарса парăр-ха, мĕн кĕтмелле пирĕн?

■ *Ксения ИВАНОВА, Тутаркасси*

Ирина КРЫЛОВА,
ЧР конкурентлă политикăпа тарифсен патшалăх службин ертӳçин çумĕ:

– Чăннипе те, июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса республикăра тарифсем улшăнчĕç. Вăтамран кăтартусем çапларах – сивĕ шыв 2,42%, таса мар шыва юхтарса кăларас пулăшу 4,24%, вĕри шыв – 2,71% ӳсрĕ. Ăшăшăн тӳлемелли хак 2,71% хăпарчĕ. Электроэнергишĕн июлĕн 1-мĕшĕнчен хулара пурăнакансен 1 киловатшăн 3,11 тенкĕ, ял çыннисен – 2,18 тенкĕ тӳлеме тивĕ.

2017 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса республикăри уйрăм муниципалитет пĕрлешĕвĕсенче граждансен коммуналлă пулăшăвăн тӳлевĕ чи нумайăи 6,2% ӳсме пултарать, анчах республикăри вăтам виçе 3,9% ытла пулмалла мар.

Республика бюджетĕнче граждансене коммуналлă пулăшăн тӳлеме социаллă пулăшу кӳрес тĕллевпе укçа-тенкĕ пăхса хунă. ЧР ĕç тата социаллă пулăшу министерствин кăтартăвĕсемпе, 2017 çулхи январь-май уйăхĕсенче 315775 çынна, ку вăл республикăра пурăнакансенчен 25,6%, коммуналлă пулăшушăн тӳлеме 664,1 млн тенкĕлĕх субсидипе тивĕçтернĕ. Пĕр çынна кӳрекен пулăшу уйăхра вăтамран 420,6 тенкĕпе танлашнă.

Федерацин Атăлçи округĕнчи регионсемпе танлаштарсан Чăваш Енре коммуналлă пулăшу тӳлевĕн хакĕ пысăк тесе калама çук. ■

Компенсацие кам тивĕçеет?

Хваттерте икĕ ватă кăна пурăнатпăр, иксĕмĕр те 70 урлă каçрăмăр. Капиталлă юсав фондне укçа-тенке кашни уйăхрах тӳлесе тăратпăр-ха. Ватăсене уншăн тивекен компенсаци пирки пĕлес килет. Калăр-ха, патшалăх пулăшăвĕпе иксĕмĕртен камăн усă курма май пур?

■ *Мироновсем, Кӳкеç*

Чăваш республикин Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствинчен пĕлтереççĕ:

– Компенсацие хваттер харпăрçисем – пĕччен пурăнакан, ĕçлемен пенсионерсем тата вĕсемпе пĕрле пурăнакан 70, 80 çула çитнĕ ватăсем илме пултараççĕ. 70 çултисен капиталлă юсав тӳлевĕн çуррине каялла тавăрма ирĕк пур, 80 çултисен – 100% таранах. Асăннă категорири çынсене капиталлă юсав тӳлевĕн тăкакĕсен пĕр пайне саплаштарма республика бюджетĕнче 13,2 млн тенкĕ пăхса хунă.

Хваттерте 2 пенсионер пĕрле пурăнаççĕ, 2-шĕ те харпăрçăсем пулсан кашниех хăйĕн пайĕшĕн компенсаци илме пултарать.

РФ Çурт-йĕр кодексĕн 169-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн, нумай хваттерлĕ çуртсенчи хваттерсен харпăрçисен миçе çултине пăхмасăр пурин те капиталлă юсав ĕçĕсемшĕн кашни уйăхрах тӳлесе тăмалла. ■

САМАХ МАЙ

2017 çулти июль уйăхĕнче нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакан уйрăм категорири граждансене капиталлă юсав фондне тӳлекен укçан пĕр пайне саплаштарма республика бюджетне 1972 пин укçа-тенкĕ çитнĕ.

Текех хăруша мар

Хаçатăн иртнĕ номерĕнче Çĕнъял ял тăрăхĕнчи Ăстакасси ялĕ çумĕнчи çырмара эмелсен çӳп-çап купине тупни çинчен пĕлтернĕччĕ. Усă курма юрăхлă вăхăт иртнĕ препаратсене ăçта хунă, мĕнле сиенсĕрлетнĕ?

■ *Светлана ИВАНОВА, Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕ*

Владимир МАРЕЕВ, Çĕнъял ял тăрăх пуçлăхĕ:

– Килсе пăрахнă эмелсене Шупашкар район тата Çĕнъял ял тăрăх администрацийĕсен ĕçченĕсем кĕске вăхăтрах пуçтарчĕç. Препаратсем тăван тавралăха сиен кӳмен. Ăстакасси ялĕ çумĕнчи çырмари усă курма юрăхлă вăхăт иртнĕ им çам препарачĕсене «Экология» НПО ООО производство базинче специалистсем утилизациленĕ. 1,403 тонна препарата 1200 ытла градус таран вĕрилентернĕ, тусан тата газсене тытса юлса тăван тавралăха сыхламалли тытăмлă ятарлă кăмакара сиенсĕрлетнĕ. ■

Карттăпа пирус туянма май пулмĕ

Виçĕ çул каялла РФ суту-илӳ тата промышленноç министерстви Раççейре сахал тупăшлă çемьесем валли апат-çимĕç туянмалли карточкăсене валеçсе пама шантарнăччĕ. Çак патшалăх пулăшăвĕпе çĕршыв сыннисене хăçан тивĕçтерме тытăнĕç?

■ *Оксана ЕГОРОВА, Шупашкар районĕ*

– Программа хăçан ĕçлеме пуçласси 2017 çулхи июнь уйăхĕнче паллă пулчĕ. 2018 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче ăна тест йĕркипе хута ярĕç. РФ ял хуçалăх министрĕн çумĕ Джамбулат Хатуов палăртнă тăрăх, кăçалхи май уйăхĕнче апат-çимĕç продукчĕсен талонĕсемпе пурăнмалли чи пĕчĕк виçерен сахалрах укçа-тенкĕ ĕçлесе илекенсем – 19 млн яхăн Раççей çынни – усă курма пултарĕç. Программăна хутшăнакансене мĕнле критерисемпе палăртассине, çавăн пекех карттăсене мĕнле йĕркепе парассине те хальлĕхе уçăмлатман. Пĕр адреспа регистрациленнĕ, çемьери кирек мĕн чухлĕ çынран тăракан тупăш ĕçлесе илме пултаракансем юлхавланнипе мар, укçа-тенкĕ чăнах та çитменнине кура пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçерен сахаллине ĕнентермелле.

Çемьен кашни уйăхри тупăшне палăртма чиновниксем кашни çыннăн юлашки виçĕ уйăхри тупăшне (кунта пенсисем, стипендисем тата пособисем те кĕреççĕ) хушнипе пулнă суммăна малтан виççĕ çине пайлама сĕнеççĕ, унтан – çемье членĕсен шучĕ çине. Енчен те цифра регионти пурăнмалли чи пĕчĕк виçерен сахалрах пулсан çемьене сахал тупăшлă тесе йышăнаççĕ тата вĕсем палăртнă льготăпа усă курма ирĕк пуррисен йышне кĕреççĕ.

Программăн ĕç схеми 2018 çулта кăна паллă пулĕ. Хальлĕхе вара РФ суту-илӳ тата промышленноç министерстви çакăн пек тытăма сĕнет: пластик карта çине кашни уйăхра балсем куçарса пыраççĕ (1 балл – 1 тенкĕ). Çак балсене çĕршывра туса кăларнă апат-çимĕçе туянма усă курма пулать. Кунта хăвăрт пăсăлакан продукци – улма-çырла, пахча çимĕç, сĕт, пулă – кĕрет. Списокра çавăн пекех çăкăр, çăнăх, кĕрпе, макарон, сахăр, тăвар, шыв, çăмарта, тип çу пур. Уйăх тăршшĕпе усă курман балсем «çунса каяççĕ», вĕсене пухма май пулмĕ. Çулталăкне продукт картти çине 10 пин тенке яхăн укçа çитет. Карта счечĕ çине çын хăй те укçа хума пултарать, хунă укçан 30-50%-не бюджетран бонус вырăнне куçарса параççĕ. Социаллă пулăшу карттипе пирус, алкоголь, деликатессем тата чипс евĕр «сиенлĕ» апат-çимĕç туянма май пулмĕ. ■

Хусанта – Роналдо, чăваш яшĕсем

Конфедераци Кубокĕ вăхăтĕнче Шупашкар район каччисем те хăрушсăрлăхпа тивĕçтернине илтнĕччĕ? Çакă тĕрĕсех-и?

■ *Денис МИХАЙЛОВ, Лапракасси ялĕ*

Александр КОЧУРОВ,
ЧР Çар комиссариачĕн Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи уйрăмĕн çар комиссарĕ:

– Çапла, тĕрĕсех. РФ Наци гвардийĕн çарĕсенче Чăваш Республикинчен, çав шутра Шупашкар районĕнчен те хĕсметре тăракан çар служащийĕсем Конфедераци Кубокĕ вăхăтĕнче Тутарстанри «Хусан-Арена» стадион тавралли территорие хуралланă. Матч кунĕсенче стадион патĕнчи виççĕмĕш транспорт дамбине аккредитациленĕ транспорт хатĕрĕсене кăна кĕртнĕ. Ентеш-салтаксем тĕнче шайĕнчи мероприяти вăхăтĕнче пулма пултаракан инкексенчен сыхлас тивĕçе туллин пурнăçланă тесе шухăшлатăп. ■

САМАХ МАЙ

Июнĕн 22-мĕшĕнче Германипе Чили, 24-мĕшĕнче Раççейпе Мексика сборнăйĕсем выляннă, 28-мĕшĕнче çурма финал иртнĕ. Çак хушăра Хусана футболăн тĕнчипе палăрнă вăйăçи Роналдо та çитсе курнă.

www.tavanen.ru Июль 7 - 13, 2017 Таван Ен № 26 (10569-10570)

• АСА ИЛ-ХА, САЛТАК!

Кĕтмен тĕл пулу

Валериан Иванович Шаров 1951 çулхи декабрĕн 13-мĕшĕнче Ырашпулăх ялĕнче çуралнă. Çемьере тăватă ачаран вăл чи асли. Арçын ача ултă çулта чухне темле майпа пӳрте кĕнĕ шар çиçĕмĕ кăмака мăрйине ватса хăварнипе çырлахман, çывăракан амăшне те вĕлернĕ.

В. Шаров

1958 çулта Валерий Ырашпулăхри пуçламăш шкула каять, Ишек шкулĕнче тăватă çул ăс пухнă хыççăн Сĕнтĕрвăрринчи училищĕне çул тытать. Унта шофер-тракторист специальноçне алла илет. Çуллахи вăхăтра каччă вĕренме Ырашпулăхран велосипедпа Сĕнтĕрвăррине çӳренĕ. 1968 çулта алла документ илсен Валерий тăван «Слава» совхозра тракторист ĕçне кӳлĕнет.

1971 çулхи майăн 3-мĕшĕнче хĕсмете кайма ят тухать унăн. Самар (Куйбышев пулнă) хулинчи учебкăра унпа пĕрле 84 чăваш каччи вĕреннĕ. Командир кашни ачана алă парса ăсатнă. Валерий БМП наводчик-операторĕ пулнă. Вăл вăхăтра çак машинăна пысăк вăрттăнлăхра тытнă. Вĕрентнĕ чух тетрадьри кашни страницăна номерлесе панă, салтаксем çырса пынине тĕрĕслесех тăнă. Тетрадьрен пĕр страницăна та çухатма юраман. Самарта пĕр уйăх вĕреннĕ хыççăн салтаксем ноябрĕн 7-мĕшĕнче парадра утма тивĕçнĕ. Пăхса тăракансем: «Идет отличная рота Антошкина», – тесе хавхалантарса тăнă. «Учебкăра Черноречье полигонĕнче ĕçме юрăхлă шыв пĕр тĕлте анчахчĕ. Ачасем çывăрса тăриччен шыв тултарса килеттĕмччĕ. Чăвашсем ĕçлеме хăнăхнă вĕт», – аса илет салтак çулĕсене Валериан Иванович.

Учебка хыççăн салтаксене 1971 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче службăна тăсма Германие илсе каяççĕ. Валерий 280-мĕш командăри мотострелоксен чаçне Перлеберг хулине лекет. Çитсенех çĕлеме пĕлнине кура Марка каччине çĕвĕ машини шанса параççĕ. Вăл ачасене бытовкăра çӳçĕсене те касса ярать. 8 уйăх Валера полк ялавĕ умĕнче караулта тăрать. БМП-па Эльба юханшывĕ урлă та каçма тӳр килет салтаксен.

Тĕнче хĕсĕк тесе ахаль каламаççĕ: Валера Перлебург хулинче хĕсметре тăнă вăхăтра хăйсен ялĕнчи Леонид Алаевпа тĕл пулать. Вăл Витенберг хулинче службăра тăнă. Иккĕшĕ те питĕ тĕлĕннĕ вара.

Валериан Иванович «Отличник СА» кăкăр паллине тивĕçнĕ, 1973 çулта ефрейтор званийĕпе яла таврăнса «Слава» совхозра тракториста ĕçлеме тытăнать. Тырă пуçтарнă вăхăтра 26 çул комбайнпа та ĕçлет. Вăл 2011 çултанпа тивĕçлĕ канура.

Мăн Марка хĕрĕпе Галина Геннадьевнăпа пĕрлешсе çемье çавăрнă Валериан Шаров. Вĕсен 6 ача тата 10 мăнук.

ЕКАТЕРИНА ГРИГОРЬЕВА, мăн марка

ХЫПАРСĂР ÇУХАЛМАН

• ХАÇАТРА ÇЫРНĂ ХЫÇÇĂН

«Тăван Ен» хаçатăн майăн 5-мĕшĕнче тухнă номерĕнчи 1-мĕш страницăра пичетленнĕ «Фронтовик тăванĕсене шыратпăр» материал питĕ кăсăклантарчĕ.

Константин Степанович Левин мăшăрĕпе Анисия Флегонтовнăпа

Унăн авторне Елена Губановăна мухтас килет. «Унта çырса кăтартни шăпах ман аттене пырса тивет»,– пĕлтерчĕ «тупăннă салтакăн» хĕрĕ Валентина. Константин Степанович Левин ун чухнехи Ишлей районĕнчи Тимĕрсырма ялĕнче 1907 çулта çуралнă. Унăн ашшĕ Степан Николаевич хресчен çемйинчен. Манăн асаттепе Иван Николаевичпа пĕр тăвансем – шăллĕпе пиччĕшĕ – пулнă.

Константинăн пиччĕшĕ Андрей 1906 çулта çуралнă, вăрçăра пуçне хунă. Шăллĕ Никита та вăрçа хутшăннă, 1979 çулта çĕре кĕнĕ. Йăмăкĕ Мария пединститутран вĕренсе тухсан 40 çула яхăн шкулта ачасене вĕрентнĕ, 80 çултан иртиччен пурăннă.

Статьяра кăтартнă фактсемпе усă курса эпир районти тата республикăри çар комиссариачĕсемпе çыхăтăмăр. Пире, паллах, Константинăн вил тăприн юлашкине хамăр пата куçарма май пурри кăсăклантарчĕ. Республикăн çар комиссарĕ ку ыйтăва тĕплĕн хуравларĕ. Çакна пĕлтĕмĕр: 26 çынна пĕр çĕрте, тăванла масарта пытарнă. Константин Левинăн юлашкине уйăрса тăван тăрăха илсе килес тесен ятарлă генетика экспертизи тумалла. Ку вара питех те кăткăс тата хаклă. Çакна шута илсе унăн хĕрĕ 87 çулти Валентина тата кинĕ Раиса ку ĕç йывăра лекет тесе аппаланас темерĕç. Çакăн çинчен ял халăхне пĕлтерме шухăшларĕç.

Июнĕн 22-мĕшĕнче ял халăхĕ асăнупа хурлăх кунне халаллănă митинга пуçтарăнчĕ. Унта пухăннисем Константин Степанович çинчен тухнă материалпа питĕ кăсăкланчĕç. Хыпарсăр çухалнă салтак юлашкисене тупни ял историйĕнче хальччен пулманччĕ.

ГЕННАДИЙ КОННОВ, тимĕрçырма

Тĕнче хĕрнех çитесчĕ

• ХИСЕПЕ ТИВĔÇЛĔ

Тĕнче тата Раççей шайĕнчи ăмăртусенче, Олимп вăййисенче утас енĕпе пысăк çитĕнӳсемпе палăрнă спортсменсен хушшинче ентешсем те сахал мар: Елена Николаева, Алина Иванова, Олимпиада Иванова, Владимир Андреев, Вера Соколова… Пирĕн тăрăхра та спортăн çак тĕсне пуринчен мала хуракан спортсмен пурăнать. Элĕк районĕнче çуралнă, халĕ Кӳкеçре пурăнакан Петр Федоров СССР, Раççей, Европа шайĕнчи ăмăртусенче темиçе хут та малти вырăна çĕнсе илнĕ.

П. Федоров

Вăл ялти, каярах кӳршĕ ялти 7-мĕш класс пĕтерсен, тантăшĕсемпе пĕрле 8 çухрăмра вырнаçнă Советски салине çӳренĕ. Çав хушăрах колхоз ĕçĕсене те хутшăнма ĕлкĕрнĕ. Шупашкарти 1-мĕш техника училищине вĕренме куçсан спорт ăмăртăвĕсене хастар хутшăнма тытăнать. Хăвăрт утас енĕпе спорт мастерĕ Василий Семенов ăна асăрхаса хăй патне чĕнсе илет. Çурçĕр тинĕс флотĕнче службăра тăнă чух та спорт пирки манмасть. Энерготехникума вĕренме кĕрсен юлташĕсемпе темиçе хут та «Советская Чувашия» хаçат эстафетинче малтисен ретĕнче пулса парнесене тивĕçнĕ. Алла диплом илсен мăшăрĕпе пĕрле Казахстанри Темир-Тау хулинчи тимĕр шăратакан комбината çĕкленĕ çĕре каяççĕ. Тепĕр икĕ çултан Казахстанри хăвăрт утакансен пĕрлештернĕ командине лекет. Пĕр ăмăртура Петр Федорович 50 çухрăм утса мала тухать, СССР спорт мастерĕн ятне тивĕçет. 1967 тата 1971 çулхи СССР шайĕнчи тупăшусенче 3-мĕш тата 2-мĕш вырăнсене йышăнать.

1969 çулта Кишинев хулинче иртнĕ ăмăртуран 3-мĕш вырăнпа тавăнать. Çакăнта ăна спорт мастерĕ Геннадий Солодов асăрхать, пур енчен те пулăшма тытăнать. Ужгород хулинче пынă ăмăртура Казахстан чысне хӳтĕленĕ Петр Федоров 50 çухрăма парăнтарса хаклă парнене тивĕçет. Тепĕр çул Киевра пынă ăмăртура Мельбурнри 1952 çулти Олимп вăййисенче лайăх кăтартусемпе палăрнă Петр Болотниковпа паллашать, унран нумай усăллă сĕнӳ илет.

1991 çулта Болгари çĕрĕ çинчи ăмăртура Петр Федоров чăваш спортсменĕсен чысне ăнăçлăн хӳтĕлет. 5 тата 10 çухрăма утса çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçет. 1992 çулхине Саранск хулинче 50-55 çулхисен хушшинче 50 çухрăма утса мала тухать. 1996 çулта Хусан хулинчи тĕп стадионра 75-79 çулхи спортсменсен хушшинче 2-мĕш вырăнпа килет.

2004 çулта Кӳкеçри стадиона пĕтĕм Раççейри ял спортсменĕсем пухăнаççĕ. Тĕп судья – Андриян Николаев космонавт – Петр Федоровича хаклă парнепе тата Хисеп хучĕпе чыслать, çĕнĕ çитĕнӳсем тума сунать.

Ентеш-спортсмен апрельте Мускав хулинче иртнĕ ăмăртусенчен те лайăх кăтартусемпе таврăнчĕ, 2-мĕш вырăна тивĕçрĕ. Вăл, хăйĕн пурнăçне спортпа тата сывă пурнăç йĕркипе çыхăнтарнăскер, ӳссе пыракан ăрушăн ырă тĕслĕх. 80 çула çывхарса пырать пулин те Петр Федоров малашне те спортпа туслă пурăнас тĕллевлĕ, ăмăртусене хутшăнма хатĕрленет.

ЛЕОНИД ПАВЛОВ, чăрăшкасси

Паян та мăшăрне «чиперкке» тесе чĕнет

• КАЛЕНДАРЬТИ КУН

1 Тăваньĕн сăмахĕсене ăша хывса ялти чиперуксемпе мар, пĕрре курса килĕштернĕ пикепе туслашнă та хайхи. Нумай та вăхăт иртмен, туй кĕрлеттернĕ. «Турри çапла çырнă. Çапла вĕт, чиперкке?», – пурнăçри чи пĕлтерĕшлĕ утăма тунине аса илсе хаш сывласа мар, кăмăллăн кулкаласа мăшăрĕпе пуплет Владимир Журавлев.

Çемьере те, пултарулăхра та юнашар

Александра Максимовна медицина училищи пĕтернĕ хыççăнах Кӳкеç больницин санитарипе эпидемиологи уйрăмĕнче ĕçлеме тытăннă та мĕн пенсие тухичченех унта вăй хунă. Владимир Андреевич вара амăшĕ чирлесе ӳксен вырăнти «Звезда» колхозра 2 çул ĕçлет. Часах ăна кунти клубра ĕç вырăнĕ сĕнеççĕ. Пĕлĕве ӳстерме вăл Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищине çул тытать. Ун хыççăн И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУра культурологи факультетĕнче куçăмсăр майпа вĕренет. Юлашки диплома вăл 54 çулта алла илет. «Пĕр вăхăтра килтен виççĕн аслă пĕлӳ илни çинчен диплом илтĕмĕр – эпĕ тата 2 хĕрĕм. Пĕтĕмĕшле шутласа пăхрăм та – эпĕ хам пурнăçăмра 33! çул вĕреннĕ!» – мăнаçлăх туйăмĕ сисĕнет унăн сăмахĕсенче. Мăшăрĕ вара ăна хавхалантарса тăнă. Ытти чăваш хĕрарăмĕ пекех хăйне сăпайлă тытса туйăмĕсем пирки калама юратмасть пулин те унăн куллинче, тыткаларăшĕнче мăшăрне хисеплени, сума суни сисĕнет.

Владимир Журавлев тăрăшулăхĕпех, 1985 çулта Шорккари «Туслăх» фольклор ушкăнĕ çуралнă. Хăйсем кăна мар, ачисене те шкулта вĕреннĕ чухне пултарулăха явăçтарнă. «Районта концертпа çитмен ял тăрăхĕ юлман, республика шайĕнчи конкурссене те сахал мар хутшăннă. Кӳршĕ регионсене те çитнĕ», – аса илеççĕ ватăсем. Фольклор ушкăнĕн 30 çулхи юбилейне халалласа кĕнеке те кăларнă Владимир Андреевич. «Халĕ эпĕ вут хурса тăраканни кăна», – тет вăл хăйĕн паянхи обществăлла пурнăçĕ пирки шӳтлесе. Журавлевсем паян та пултарулăх ушкăнĕнчен уйрăлми, карчăкпа старик ролĕсене калăплама вĕсене шанаççĕ. Унсăр пуçне Александра Максимовна спектакльсемпе интермедисенче вĕçкĕнрех хĕрарăмсен сăнарĕсене калăплама кăмăллать. «Пурнăçра хама хам сăпайлă çын тесе шухăшлатăп, спектакльсенче вара хама вĕçкĕнрех тытатăп», – тет вăл.

Çемье тĕшши мĕнре? Паллах, ачасенче. 4 хĕрпе 1 ывăла ӳстернĕ мăшăр, аякка саланман тĕпренчĕкĕсем – тĕп хуларан час-часах килсе çӳреççĕ. 5 мăнук парнеленĕ вĕсем ашшĕ-амăшне, паян вĕсемпе киленеççĕ Журавлевсем.

Пĕр-пĕринчен шӳтлесе тăрăхласси те, сăмахпа тĕртсе илни те пулкаласан та Журавлевсен çемйинче ăнланулăх, туслăх, килĕшӳ хуçаланать. Юрату шăпах çакăн çинче никĕсленмест-и вара?

АННА ФИЛИППОВА

• ДЕНЬ ЗА ДНЕМ

Погода с «сюрпризами»

В связи с неблагоприятными погодными условиями по поручению Михаила Игнатьева с 6 июля 2017 года на территории Чувашской Республики для органов управления и сил территориальной подсистемы Чувашской Республики единой государственной системы предупреждения и ликвидации чрезвычайных ситуаций введен режим повышенной готовности.

Напомним, что по данным Гидрометцентра Чувашии, в ночь с 5 на 6 июля 2017 года на территории Чувашской Республики установились неблагоприятные погодные условия: сильный дождь, усиление ветра до 8-13 м/с, местами грозы. 5 июля на территории республики выпало в среднем 42 мм осадков. В городах Алатырь и Канаш, Алатырском, Порецком, Ибресинском и Канашском районах за сутки выпала месячная норма осадков (от 58 до 80 мм).

По данным ЕДДС администрации Чебоксарского района, информация о режиме повышенной готовности получена, никаких сообщений от жителей района за вчерашние сутки и сегодняшний день не поступало.

Как сообщил генеральный директор ООО «Теплоэнергосети» Николай Елагин, на данный момент по устранению последствий дождя в поселке работают две бригады по 4 человека. После ливней, прошедших в выходные, в старых кирпичных домах по улицам Шоссейная, К. Маркса, 30 лет Победы провалились канализационные колодцы и стоки. «Ремонтные работы идут полным ходом. Кладем временные щиты на колодцы, устанавливаем знаки, чтобы жители и автомобили не подверглись опасности. В основном, провалились колодцы с кирпичной кладкой. С целью устранения неполадок в последующем нужно будет заново выкапывать колодцы и устанавливать железобетонные кольца и крышки», – поделился Николай Арсентьевич. Примерный материальный ущерб составляет около 100 тысяч рублей.

Неблагоприятные погодные условия могут спровоцировать и аварии на дорогах. Поэтому сотрудники ГИБДД призывают водителей быть предельно внимательными за рулем. По информации начальника ГИБДД по Чебоксарскому району Юрия Полякова, в связи с погодными условиями на территории района за прошедшие сутки аварий не зарегистрировано.

К СЛОВУ

Опасные природные явления могут привести к возникновению происшествий, связанных с нарушением функционирования объектов жизнеобеспечения, обрывом ЛЭП и линий связи, обрушением слабо укрепленных конструкций, ветхих крыш, высотной строительной техники и кранов, затруднением в работе всех видов транспорта, подтоплением подвальных помещений, цокольных этажей, жилых домов, объектов социальной сферы.

Новости с пригородным акцентом

Причебоксарье

На военную службу – НА КУРОРТ

• ПРИЗЫВ

«Наверное, мое стремление попасть именно в элитные войска, целеустремленность, хорошее поведение и тяга к спорту помогли мне сегодня стоять здесь, на отправке в воздушно-десантные войска», – поделился с нами кандидат в мастера спорта по кикбоксингу Даниил Павлов, в 19 лет имеющий первый взрослый разряд по боксу.

Фото Е. Дадюковой

Наставления перед отправкой в войска всегда пригодятся

С самого раннего детства Даниил готовил себя к службе в элитных войсках. Проживающий в деревне Карандайкасы, молодой человек занимался боксом у тренера Николая Иванова в физкультурно-оздоровительном комплексе «Улăп». После 9-го класса поступил в Чебоксарский техникум строительства и городского хозяйства и выучился по специальности «Монтаж, наладка и эксплуатация электрооборудования промышленных и гражданских зданий». «Чтобы попасть именно в ВДВ, нам пришлось пройти различные испытания в виде анкетирования, тестирования, при этом должно быть отличное здоровье, воспитание в полной семье, отсутствие судимости среди родственников, – рассказал будущий военнослужащий. – После службы я планирую получить высшее образование на юридическом факультете, затем устроиться в органы внутренних дел».

На прошлой неделе, 28 июня, состоялась отправка в ВДВ двоих жителей из Чебоксарского и одного из Мариинско-Посадского районов. Трое молодых людей прошли обучение в Авиаспортклубе ДОСААФ, там они совершили три прыжка с парашютом, научились укладывать их. Александр Елизаров (п. Кугеси), Даниил Павлов (д. Карандайкасы) и Иван Гуржий (г. Мариинский Посад) отправились в Омский учебный центр ВДВ, где после 3-4 месяцев обучения будут распределены по частям и подразделениям ВДВ России.

19-летний Александр Елизаров пошел по стопам своих родственников, которые проходили срочную службу, и никогда не думал избегать исполнения долга перед Родиной. Пока планов на дальнейшую службу по контракту он не строит – сначала, по его мнению, год отслужить надо.

О предварительных итогах призывной кампании 2017 года на еженедельной планерке в администрации Чебоксарского района доложил военный комиссар Чебоксарского и Мариинско-Посадского районов ЧР Александр Кочуров.

Он сообщил о том, что 2 июля состоялась одна из последних отправок 7 молодых людей в войска. Однако призыв будет длиться до 15 июля, так как существует резерв Генерального штаба, при котором возможно получение задания, если какой-то субъект РФ не выполнит план.

По словам Александра Алексеевича, всего призывную комиссию прошли 351 человек при плане 451. С лучшей стороны были отмечены Атлашевское, Вурман-Сюктерское, Лапсарское сельские поселения. «В этом году День призывника мы провели совместно с Мариинско-Посадским районом в Музее космонавтики, где для ребят была подготовлена большая культурно-развлекательная программа, которой все остались довольны», – поделился военный комиссар.

Во время весеннего призыва большинство ребят были направлены в курортные зоны: Крым, Севастополь, Анапу, Феодосию, Адлер, Сочи. На контрактную службу при плане 11 человек уже отобрано 15 ребят со средним профессиональным образованием.

ЕЛЕНА ДАДЮКОВА

До юбилея газеты 85 лет остался 21 день

27 июля

Война оборвала все планы

Учительсем, колхозниксем, культура ĕçченĕсем, ахаль çынсем кăмăл туртăмĕпе пĕрлешсе ял-салара, хуласенче спектакльсем лартаççĕ. Уйрăмах ăнăçлă ĕçлекен халăх театрĕсен «Яланах театр» конкурс-фестивальте Кӳкеçри культура çуртĕнчи сцена çинче хăйсен ăсталăхне кăтартма май пулчĕ. Çĕньялти халăх театрĕ Андрей Кудрявцев пьесипе лартнă «Юратăва айăплама юрамасть» спектакльти пĕр сыпăка выляса пачĕ. Кĕнекери сăнарсене сцена çинче асамçă евĕр чун кĕртекен режиссер, хăйне вăл художник-постановщик тет, Валентин Захаров ушкăнĕн пултарулăхĕпе паллаштарчĕ.

«Юратăва айăплама юрамасть» спектакльти пĕр самант

– Валентин Николаевич, биологипе хими учителĕ хăйĕн пурнăçне театрпа мĕнле майпа çыхăнтарнă-ши?

– 13-14 çулсенчех сцена çинче выляма пуçланă. Паянхи кун тĕлне 47 çулта сцена çинче 44 роль калăпларăм. Ытларах тĕп рольсем, уйрăмах каччă сăнарĕсене вылярăм. Паянхи кун та каччă ролĕсене калăплатăп.

– Çĕньялти халăх театрĕн историйĕпе вулакана та паллаштарăр-ха...

– 1977 çулччен ялта драма кружокĕ ĕçленĕ. Эпĕ шкулта вĕреннĕ чухне ăна чăваш чĕлхипе литература учительници ертсе пычĕ. Сцена çинче сценкăсем, пĕчĕк спектакльсем лартаттăмăрччĕ. 1977 çултан ялта халăх театрĕ ĕçлеме пуçларĕ. Ăна ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ăста режиссер Георгий Александрович Александров ертсе пычĕ. Вăл тăрăшнипе çак çул пирĕн театр Владимир Суздальте пĕтĕм Раççейри халăх театрĕсен фестивалĕнче I степень диплома çĕнсе илчĕ. Çакăн хыççăн пултарулăх коллективне халăх театрĕн ятне пачĕç. 1980 çултанпа халăх театрне Зинаида Николаевна Петрова ертсе пычĕ.

– Театр «тилхепийĕ» хăçан сирĕн алла куçнă?

– И.Я. Яковлев ячĕллĕ чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренсе пĕтерсен Алькешри шкулта ĕçлерĕм. 1993 çултанпа ялти культура вучахĕн директорĕнче тăрăшатăп, 2015 çултанпа вара – художник-постановщик те. 60 çултан каçрăм пулин те театр юхăмне пăрахас килместха. Çĕньял театрне Зинаида Николаевна ертсе пынă пекех малалла тытса пырса, унăн пултарулăх шайне хăпартса, халăха спектакльсемпе савăнтарас килет.

– Паян «Юратăва айăплама юрамасть» спектакльти пĕр сценкăна куртăмăр. Чуна пырса тиврĕ...

– Çак сценкăра Надежда Таерова тата çĕнĕ артистка, халь кăна выляма пуçланă Ольга Туринге ватă хĕрарăмсен ролĕсене калăпларĕç. Сектакльти ĕç-пуç 1985 çулсенче пулса иртет. Вăрçă çулĕсенче нимĕçсем ял халăхне тискеррĕн çунтарса яни, тытăканри совет салтакĕсене хĕнени, мăшкăллани çинчен вăрçă нушине курнăскерсем аса илсе каласа параççĕ. Хăйсен çамрăк чухнехи таса та пысăк юратăвĕ çинчен те. Спектакль вăхăтĕнче çамрăк çынсен те, хĕрсен те куçĕсем шывланаççĕ.

– Вăрçа кашни килтен тухса кайнă. Эппин çак тема сире те çывăх.

– Атте Николай Захарович Захаров 37 çулта фронта тухса кайнă. Вăрçăра 2-3 хутчен аманнă, унтан хăрах урасăр киле таврăнса пире 8 ачана ура çине тăратнă. Кашни Çĕнтерӳ кунĕнче аттен вил тăприйĕ çумĕнчи юпа умĕнче чыс парса караулта тăратпăр... Атте-аннене хисеплесе сад пахчинче лартнă сакăр улмуççие «Çĕнтерӳ улмуççийĕсем» тесе ят патăмăр.

– Сирĕн театр репертуарĕ мĕнпе пуян?

– Людмила Сачкова çырнă «Эсĕ кайрăн та» спектакле вылятпăр (Чечня вăрçи вăхăтĕнче пулса иртнĕ мыскарасем çинчен). Александр Пăрттан «Вăрмана юлнă çамрăклăх» спектакльне те нумаях пулмасть калăпларăмăр. Ăна сенкер экранпа кашни эрнерех кăтартаççĕ. «Ак, тин çеç сире телевизорпа куртăм», – теççĕ çынсем час-часах хулара троллейбусра палласа илсе. Çавăн пекех «Пуса каччи», «Хусах Ваççа авланать» спектакльсене те куракан патне çитеретпĕр. Кашни сезонрах 2-3 актлă пысăк тата пĕчĕкрех спектакльсем, кулăшла интермедисем калăплатпăр.

– Халăх театрĕнче ачасен ушкăнĕ пурри пирки те илтнĕччĕ...

– Çапла. Акă кăçал вĕсем Кӳкеçре Сурхури фестивалĕнче вырăсларан чăвашла куçарнă «Помçик» ятлă спектакле лартрĕç. Унта çынпа чĕр чун хушшинчи çыхăнăва сăнланă. Спектакль чĕр чунсене упрама, юратма вĕрентет.

– Спектакльсемпе ăçта-ăçта çитетĕр?

– Ялта пĕр спектакле 3-4 хутчен вылятпăр. Тата çывăхри ялсене те тăтăшах тухса çӳретпĕр. Вĕсенче культура çурчĕ пур-и, çук-и, ларма-тăма вырăн пулсан çавăнтах спектакльсем выляма май тупатпăр. 2-3 çул каялла театр коллективĕпе Пушкăртри чăвашсем патĕнче гастрольте пултăмăр, 10 кун кашни чăваш ялĕнче спектакль лартрăмăр.

– Репетицисем валли вăхăт тупаять-и вара ĕçлĕ халăх?

– Энере виçĕ хутчен пуçтарăнатпăр. Тĕрĕсех, театра çӳрекенсем кăнтăрлах пырса лараймаççĕ. Репетицисене каçпа 18 сехетрен пуçласа 22 сехетчен ирттеретпĕр. Шупашкартан та, Кӳкеçрен те çӳреççĕ пирĕн пата.

– Малашнехи плансем мĕнлерех?

– Анлă, «Юратăва айăплама юрамасть» спектакльпе сенкер экран çине тухассăн. Тата икĕ спектакле те чун кĕртесшĕн. Спектакльсене лартма хĕрсене тупма пулать, арçынсене, уйрăмах каччă сăнарĕсене калăплакансене, вара йывăртарах. Çамрăксем хутшăнасшăнах мар. Те вăтанаççĕ, те урăх сăлтав пур. Сцена çинче камит пулни те лайăх, çав хушăрах шухăшлаттараканнисем те кирлĕ. Куракан пулсан театр ĕмĕрĕ вăрăм пулĕ.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА



Черчен, тӳсĕмлĕ

• СЫВĂ ПУРНĂÇ

Кӳкеç лицейĕн вĕренекенĕ Рената Чайникова Калугăра полиатлонпа иртнĕ Раççей Чемпионатĕнче тата Первенствинче республика спортсменĕсен чысне тивĕçлĕн хӳтĕленĕ.

Спортăн пилĕк тĕсĕпе иртнĕ çуллахи ăмăртăва çĕршыври 19 регион командисем хутшăннă. Тăватă кун вĕсем чупас, ишес, мечĕк ывăтас тата пăшалпа перес енĕпе вăй виçнĕ. Çĕнтерӳçĕсене балсен шучĕсене кура палăртнă.

Ăмăртусен юлашки кунĕнче спортсменсен чăтăмлăхне тĕрĕслекен чупу кĕтнĕ. Рената çакăнта палăрнă та. Спортри пултарулăхне Кӳкеçри «Улăп» сывлăхпа спорт комплексĕнче аталантараканскер 306 очко пухса 12-13 çулти хĕрсен хушшинче 12-мĕш вырăн йышăннă. «Çанталăк кансĕрлемерĕ. Çумăр çурĕ пулин те спринт ăмăртăвĕсем пуçланиччен çулсем типрĕç... Килте мана савăнăçлă атте-анне кĕтсе илчĕ», – хăйĕн кăмăлне уçрĕ Рената.

Спортсмен уйрăмах ишес енĕпе ăмăртма килĕштернине пĕлтерчĕ. Валерий Иванов тренер патĕнче пиçĕхекенскер иртнĕ кĕркунне Республика Чемпионатĕнче тата Первинствинче ирĕклĕ стильпе ишсе лайăх кăтартусемпе палăрнă. Çак çулах Рената пĕтĕм Раççейри «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» комплексăн Владимирта иртнĕ çуллахи фестивалĕнче Чăваш Ен командине самай очко пухма пулăшнăччĕ.

▶ **Каç пулсан вара** дачниксем автотранспорт иртмелли çула пӳлес мар тесе çăмăл машинисене сад юлташлăхне кĕнĕ çĕрте ятарласа уйăрнă стоянкăна лартаççĕ.

• ХĂРУШСĂРЛĂХ

Юлташлăх туйăмĕ сыхлать

Хăй ирĕклĕ дружинăсем коллективлă садсенче талăкĕпех хуралта тăраççĕ

Пĕлтĕр районти сад юлташлăхĕсенче «хĕрлĕ автан» 6 хут ташланă, кăçал çулталăк пуçланнăранпа çав шутра дачăсенче те – 8.

Сăлтав тĕрлĕрен

РФ МЧСĕн Шупашкар районĕнчи профилактика тата надзор ĕçĕ-хĕлĕн уйрăмĕн сотрудникĕсем ялтăрăх пуçлăхĕсемпе эрнесерен рейдсем ирттерсе вут-çулăмпа асăрхануллă пулмаллине аса илтереççĕ. Анчах та канмалли кунсенче пушарнăйсен çак ĕçе пурнăçлама май килмест. Дачăсенче пушарсем хăçан тухнине тишкерни вара шăпах çак кунсенче сад юлташлăхĕсенче вут-çулăм уйрăмах йышлă тухнине кăтартса парать. Акă май уйăхĕнчи канмалли кунсенче кăна 5 дача çуннă. Сăлтав – тĕрлĕрен. «Радуга-1» сад юлташлăхĕнчи пушар ятарласа тивертнипе пулни паллă. Кăмакасене вырнаçтарас тата усă курас правилăсене пăхăнманни «Автотранспортник-2», «Дубрава», «Нива», «Виктория» сад юлташлăхĕсенче «хĕрлĕ автана» ташлаттарнă, электрооборудование вырнаçтарас тата усă курас правилăсене пăснипе тухнă пушарсем «Три дуба», «Факел» сад юлташлăхĕнчи дача çурчĕсене çĕрпе танлаштарнă. «Дубрава-1» сад юлташлăхĕнче çын пурнăçне татнă вут-çулăм вара пирус туртнă чухне асăрхануçăр пулнипе тухнă.

Сад – иккĕмĕш кил вырăнĕнче

Дачăсенче пушарсен шучĕ ӳснине кура РФ МЧСĕн Шупашкар районĕнчи профилактика тата надзор ĕçĕ-хĕлĕн уйрăмĕ вĕсенче дачниксенчен ирĕклĕ пушар хуралĕсене йĕркелеме сĕнĕччĕ. Çĕньял ял тăрăхĕнчи «Дубрава-1» сад юлташлăхĕнче çакăн пек тытăм нумай пулмасть ĕçлеме пуçларĕ те ĕнтĕ. Хурал председателĕшĕн Наталья Максимовăшăн, кунта çамрăк чухнех ĕçлеме килнĕскершĕн, сад юлташлăхĕ иккĕмĕш кил вырăнĕнчех. Пĕтĕм чунчĕрипе уншăн «чирлет» вăл. Николай Никифоров тата Анатолий Куприянов – унăн пулăшуçисем. Николай Леонтьевич пенсие тухиччен инженерта ĕçленнĕ, ирĕклĕ пушар хуралне кĕме сĕнсен шухăшламасăрах килĕшнĕ. Анатолий Куприянович монтажник пушар хуралĕнче ылмаштарма май çук специалист тесен те йăнăш пулмĕ.

> Сад юлташлăхĕпе утнă май çул айккинче çӳп-çап выртни курăнмасть

Сад юлташлăхĕнчи 1134 участок 58 га çинче вырнаçнă. Çуртсем çумма çумăн тăнăран пушар тухсан вут-çулăм юнашаррине куçас хăрушлăх пысăккине ăнланни алла талăкĕпех юн таппи çинче тытса тăма хистет. Наталья Максимова дачниксен тирпейлĕхне палăртса вĕсем çӳп-çапа ăçта-кирлĕ унта пăрахманнине пĕлтерчĕ, дачăна пырса кĕнĕ çĕрте вырнаçтарнă пысăк контейнера хураççĕ. Ăна кашни эрнере турттарса тухса пушатаççĕ.

Урамсем таса, шыв пур

Сад юлташлăхĕпе утнă май çул айккинче çӳп-çап выртнине чăн та курмарăм. Курăка та çулса илнĕ. Сарлака та таса çулсем тăрăх пушар машинине е урăх оперативлă служба техникине инкек вырăнне çитме чăрмавлă мар. «Дачниксем урамра хытă каяш, стройматериал çӳп-çапĕ пухса хунине курсанах пуçтарттаратпăр. Тĕрĕссипе, вĕсем çакна тумаллине каласса та кĕтмеççĕ», – тет пушар хуралĕн ертӳçи.

Каç пулсан вара дачниксем автотранспорт иртмелли çула пӳлес мар тесе çăмăл машинисене сад юлташлăхне кĕнĕ çĕрте ятарласа уйăрнă стоянкăна лартаççĕ. Транспорт хатĕрĕсен сыхăлăхĕшĕн пуçа ыраттарма тивмест. Кунтах – хуралçă çурчĕ. Çак ĕçре вĕсене тăватă уралла тусĕсем пулăшаççĕ.

Вут куçне шыв теççĕ. Вутçулăм алхасма тытăнсан иккĕмĕшĕсĕр май та çук. Сад юлташлăхĕнче ку енĕпе нимĕнле йывăрлăх та çук. 150 кубла метр шыв кĕрекен виçĕ пичке яланах тулли. Шыв гидранчĕсем вĕсен çумĕнчех вырнаçнă. Пушар машини валли ăна тарăн яракан насуспа та илме май пур. Сад юлташлăхĕнчи килсене секторсене пайлани шывсăр ларассинчен хăтарать. Кашни сектора ăна палăртнă вăхăтра сехет çурăлăх параççĕ. Дачăра пурăнакансемпе пушар хăрушсăрлăхĕпе инструктажсем тăтăшах ирттереççĕ. «Пирĕн уполномоченнăйсем кашни урамра пур. Вĕсене те пушар хуралне кĕртмеллех», – пĕлтереççĕ хăрушсăрлăхшăн чун ыйтнипе тăрăшакансем хăйсен речĕ татах туласса шанса.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

Мунча кунĕ

инкек патне илсе ан çитертĕр

• 01 ПĔЛТЕРЕТ

Çулталăк пуçланнăранпа республикăра 436 пушар пулнă. Вут-çулăмра 33 çын пурнăçĕ татăлнă, 37-шĕ суранланнă, 112 çынна çăлса хăварнă. «Хĕрлĕ автана» пула 45 млн тенкĕлĕх пурлăх çунса кĕлленнĕ.

Июлĕн 4-мĕшĕ тĕлне Шупашкар районĕнче пулнă 35 пушартан 11-шĕ кăмакана вырнаçтарас тата усă курас правилăсене пăснин сăлтавĕпе тухни паллă. Акă июлĕн 2-мĕшĕнче кăнтăрла ирт-сен Шупашкар районĕнчи Загорское поселокĕнчи Долгопрудная урамри çĕнĕ йывăç çуртра вут-çулăм тухнă. Çак кун 37 çулти кил хуçи кăмака хутса янă, анчах вĕри мунчара милĕкпе çапăнса рехетленес вырăнне унăн ташша çапнă «хĕрлĕ автана» лăплантарма тивнĕ.

РФ МСЧĕн Шупашкар районĕнчи профилактика тата надзор ĕçĕ-хĕлĕн пуçлăхĕ Денис Портнов пĕлтернĕ тăрăх, пушар мунча кăмакин тĕтĕм çулне тĕрĕс мар вырнаçтарнине пула тухнă. Мунчана пурăнмалли çуртăн 1-мĕш хутĕнче тунă. Çулăм мăрье çумĕнчи пӳрт таррин пĕр пайне тĕп тунă. Çулăмпа Кӳкеçрен, Шупашкартан тата Çĕнъялтан çитнĕ тăватă пушар машини кĕрешнĕ.

МИЛЕНА СЕРГЕЕВА

СĂМАХ МАЙ

Мунча кăмакине вырнаçтарас ĕçе сертификатлă строительство организацийĕсене кăна шанма юрать. Вут-çулăм тухас пулсассăн экспертиза кăмакана йĕркене пăсса тунине çирĕплетсен кил хуçисен штраф тӳлеме лекет.

Аварире яш пурнăç татăлнă

• ÇУЛ ÇИНЧЕ

Ачасен вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕренпе Чăваш Республикин çул-йĕр патшалăх инспекцийĕнчен автоçулсем çинче мотоциклистсем хутшăннипе пулнă çул-йĕр инкекĕсен шучĕ ӳснине пĕлтереççĕ. Кашни кун тенĕ пекех оперативлă сводкăсенче вăтамран çакăн йышши икшер инкеке регистрацилеççĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа (июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне) республикăра мототранспорт хутшăннипе 26 çул-йĕр инкекĕ пулнă, вĕсенче 5 мотоциклист вилнĕ тата 26-шĕ суранланнă. Июнĕн 29-мĕшĕнче икĕ урапаллă транспорт хутшăннипе тӳрех икĕ авари пулнă. Пĕри – «Шупашкар-Сăр-Кăшавăш-Студгородок» автоçул çинче каçкӳлĕм пилĕк сехетре пулнă. Шупашкар районĕнчи Кăшавăш ял тăрăхĕнче. Кăшавăшра пурăнакан 16 çулти каччă юлташĕнчен нумаях пулмасть туяннă, палăртнă йĕркепе регистрацилемен «Кобра» мотоциклĕпе ялтан «Шупашкар-Сăр» автоçул еннелле ярăнма тухнă. Çамрăкăн водитель прави пулман, руль умĕнче те нихăçан та ларса курман вăл. Мотоциклпа пысăк хăвăртлăхпа пынă, хирĕç машинăсем килекен йĕр çине тухнă. Çак вăхăтра хирĕç килнĕ «Форд Транзит Коннект» машина мотоциклпа çапăнас мар тесе çул хĕрринепăрăннă, анчах каччă та çавăнталлах çавăрнă. Инкеке сирме май килмен. Кăçал 9 класс вĕренсе пĕтернĕ арçын ача васкавлă медицина пулăшăвĕ килсе çитнĕ хыççăнах сурансене пула вилсе кайнă.

Йывăр грузлă транспорт хатĕрĕн 57-ри водителĕ руль умĕнче урах пулни паллă – экспертиза юнра алкоголь паллисене тупман.

Кăшавăш ял тăрăх пуçлăхĕ Сергей Мульдияров каччă мотошлемсăр пулнине палăртать. «Тен, пуçне хӳтĕленĕ пулсан йывăр сурансенчен хăтăлма та пултарĕччĕ», – тет вăл. Çав кун каччăн çуралнă кунĕ пулнă. РФ çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ Юрий Поляков пĕлтернĕ тăрăх, 2017 çулта Шупашкар районĕнче 49 çул-йĕр инкекĕ пулнă, вĕсенче 5 çын вилнĕ, 74-шĕ суранланнă.

СĂМАХ МАЙ. Чăваш Республикинче июнĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 2-мĕшĕччен иртнĕ «Мото» рейда ЧР ГИБДДн 395 сотрудникĕ хутшăннă. Виçĕ кунра çул-йĕр правилисене пăсса мототранспортпа çӳрекен 28 водителе чарнă. Вĕсенчен 10-шĕ мототранспортпа çӳреме ирĕк паракан правасăр руль умне ларнă (РФ КоАПĕн 12.7 статйи (1-мĕш пай)), пĕри суд йышăнăвĕпе водитель прависене туртса илнине пăхмасăрах çул çине тухнă (РФ КоАПĕн 12.7 статйи (2-мĕш пай)), тепри документсемсĕр пулнă (РФ КоАПĕн 12.3 статйи (1-мĕш пай)). Рейд вăхăтĕнче мототранспортпа 3 авари пулнă, вĕсенче 4 çын суранланнă.

В России все события марафона в деталях покажут телеканалы «Матч ТВ» и «Россия 24», регулярные выходы в эфир также планируются на НТВ и Russia Today.

ПАМЯТНИКИ от 2000 рублей
АО «Базальт» г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 7.
предлагает **ПАМЯТНИКИ, КРЕСТЫ ИЗ МРАМОРНОЙ КРОШКИ, ЧЕРНОГО ГРАНИТА, СЕРОГО И БЕЛОГО МРАМОРА.**
● Столики, скамейки, ограды, венки.
● СКИДКИ, РАССРОЧКА ПЛАТЕЖА. ГАРАНТИЯ.
ДОСТАВКА И УСТАНОВКА. БЕСПЛАТНОЕ ХРАНЕНИЕ.
☎ 8 (8352) 56-29-68.
01-73 06-65

Окна, двери, натяжные потолки.
8-962-599-65-62.

Требуются сотрудники в офис.
Тел. 8-900-331-76-78. 07-12

Кольца колодцев ж/б
D-0.7; 1.0; 1.5.
● Бурение колодцев и скважин.
● К/б блоки от производителя 20х20х40, 30х20х40, 12х20х40.
● Доставка.
Т.: 8-902-327-82-52. 02-11

Коллегия юридической защиты
Юридическая помощь по возврату водительских удостоверений. ДТП.
Возврат по амнистии уже лишенных прав. Официально.
Тел.: 8-800-35-01-002. Звонок бесплатный! 05-04

Окна. Двери.
Гарантия. Качество. Недорого.
При предъявлении купона СКИДКА 5%
8-987-579-25-33. 06-24

Скидки до 50%
Пластиковые окна от оконного завода
Летние суперскидки.
От 2800 руб.
ЗА ДЕРЕВЕНСКОЕ ОКНО.
Утепленные в 3 стекла.
Вызов замерщика бесплатно.
8-927-668-69-55. 06-63

ООО «ТМ»
ПРОИЗВОДИМ И ДОСТАВЛЯЕМ БЫСТРО, КАЧЕСТВЕННО, С ГАРАНТИЕЙ
ПРОФНАСТИЛ
ДЛЯ КРЫШ И ЗАБОРОВ оцинкованный и с полимерным покрытием разных цветов
МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦА «МОНТЕРРЕЙ»
Производство на новом современном оборудовании
Изготовление по размерам Заказчика, а также:
■ доборные элементы на заказ
■ трубы профильные
■ крепеж в ассортименте
■ евроштакетник для забора цветной металлический
ДОСТАВКА 1000 рублей
ЗАЯВКИ ПО ЗВОНКУ. ОПЛАТА ПРИ ДОСТАВКЕ.
☎ 89524659723; 89290427904; тел/факс: 8(83174) 2-86-05.
ЭЛ. ПОЧТА: ooo-tm1@mail.ru, САЙТ: profil-tm.ru 06-59

Экологичный утеплитель
ЭКОВАТА
от производителя С ДОСТАВКОЙ.
Профессиональный монтаж с гарантией 5 лет!
На рынке более 20 лет!
8(903)359-71-74, 499-399.
www.ecovata21.ru
Пенсионерам скидка - 5% 05-50

СУТАТПĂР
ПРОДАЕМ

06-42. **Продаю гравмассу, песок, щебень, бой кирпича и бетона, цемент М-400, М-500. Доставка. Тел.: 8-927-849-76-75.**

04-68. Продаю к/б блоки от 32 рублей, цемент, доски, песок, гравмасса, кирпич, профнастил, профтрубы. Услуги манипулятора. Тел.: 8-903-345-53-24, 8-903-322-25-32.

06-45. Бычков. Телок, овец, ягнят романовской породы. Тел.: 8-987-126-30-07.

07-01. Хĕрлĕ-шурă тĕслĕ 2 уйăхри тына пăрупа вăкăр сутатăп. Тел.: 8-906-388-73-83.

7-13. Зерно. Доставка бесплатно. Тел.: 8-937-393-57-57.

ТУЯНАТПĂР
КУПИМ

05-14. Куплю скотину. Дорого. Тел.: 8-961-344-03-82.

05-38. КРС, свиней, лошадей. Тел.: 8-902-327-56-06.

07-03. Корову, бычка, телку, овец. Тел.: 8-905-342-39-43.

КИЛ-ÇУРТ
НЕДВИЖИМОСТЬ

06-40. **3-х комнатную квартиру, 69 кв. Инд., отоп. п.Кугеси. Ул. К. Маркса, д. 112. Дом сдан. 6 этаж. Цена 2030 тыс. Тел. 8-903-322-31-22.**

ПУЛĂШУ
УСЛУГИ

05-42. **Натяжные потолки. Акции! Замер бесплатно! Тел.: 37-62-44.**

06-08. **Чистка колодцев, скважин. Тел.: 8-961-342-90-59.**

06-10. **Отопление, водопровод, канализация. Тел.: 8-917-678-19-65.**

06-57. **Услуги мини-экскаватора, эвакуатора. Тел. 8-927-857-72-60.**

06-43. **Строительство домов и бань под ключ. Кровельные и отделочные работы, обшивка фасадов. Кладка, фундаменты. Заборы. Срубы. Тел.: 8-927-667-03-55.**

ТĔРЛĔРЕН
РАЗНОЕ

06-62. Утерян аттестат об основном общем образовании на имя Филиппова Геннадия Владимировича, 1987 года рождения, выпускника МОУ «Янгильдинская СОШ» Чебоксарского района Чувашской Республики 2003 года. Просим вернуть аттестат за вознаграждение.

ÇĔР
ЗЕМЕЛЬНЫЕ ОТНОШЕНИЯ

07-08. Администрация Чебоксарского района извещает о возможности предоставления в аренду сроком на 20 лет земельного участка площадью 1429 кв.м. с кадастровым номером 21:21:290103:30, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Сирмапосинское сельское поселение, с. Икково, ул. Молодежная (земли населенных пунктов), для ведения личного подсобного хозяйства.

Подача заявлений о намерении участвовать в аукционе на право заключения договора аренды земельного участка осуществляется в течение тридцати дней со дня опубликования извещения. Дата окончания приема заявлений – 07 августа 2017 года, 17 часов 00 минут. Заявки принимаются в письменной форме, по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15. Телефон для справок (8-83540) 2-14-00.

07-05. Результаты аукциона по продаже земельных участков: на основании распоряжения администрации Сирмапосинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики от 19.05.2017 г. №14, 03.07.2017 г. был организован открытый аукцион по продаже в собственность земельных участков с кадастровыми номерами 21:21:210507:196, 21:21:210507:199, 21:21:210507:200 площадью по 0,135 га и 21:21:210507:201 площадью 0,1193 га, расположенные на территории Сирмапосинского сельского поселения Чебоксарского района, который был признан несостоявшимся в связи с тем, что на участие в аукционе не было подано заявок.

Рубрика «СОБОЛЕЗНОВАНИЕ»
для юрлиц и ИП[1] – **600 РУБ,**
для частных лиц[2] – **400 РУБ.**
[1] Свыше 40 слов – дополнительно 25 руб, за каждое слово.
[2] Свыше 40 слов – дополнительно 18 руб, за каждое слово.

ХУРЛАНАТПĂР
СОБОЛЕЗНУЕМ

Коллектив Централизованной библиотечной системы Чебоксарского района выражает искреннее соболезнование Ивановой Галине Валериановне, заведующей Кшаушской сельской библиотекой, в связи со смертью сына
АЛЕКСЕЯ. 07-02.

Апаш шкулĕнче ĕçлекенсем нумай çул водитель пулса ĕçленĕ
Анатолий Евдокимович НИКОЛАЕВ
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки чун-чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ. 07-09.

Чӳрече янахĕ – вăйă вырăнĕ мар

• ХĂРУШСĂРЛĂХ

Çуртăн пиллĕкмĕш хутĕнчи пĕр балконран 5-6 çулти ачан пуçĕ курăнса кайрĕ. Шăпăрлан чӳрече кантăкĕсене яриех уçса ячĕ. Пилĕкĕ таранах тайăлнăскер ун-кун пăхкалать. Хам сисмесĕрех алă кĕсьере телефон шырарĕ: васкавлă службăна чĕнмелле мар-и? Балкон çинчи шăпăрлан куçран çухалсан тин чĕре лăштах пулчĕ.

Çакăн пек ӳкерчĕке сăнама тӳр килчĕ мана иртнĕ канмалли кунсенче. Çумăрлă çанталăкра та çынсем чӳречесене яриех уçса пăрахаççĕ. Ача чӳречерен тухса ӳкни Шупашкар районĕнче те пулман мар. Кӳкеçре пурăнакан Марина Иванова çакăн пек чуна çӳçентерекен ӳкерчĕке хальхи пек ас тăвать: *«Темиçе çул каялла пулчĕ ку. Кӳкеçри Советская урампа утса пынă чухне пилĕк хутлă пĕр çурт умĕнче çынсем кĕпĕрленсе тăнине, васкавлă медицина пулăшăвĕн машинине куртăм. «Мĕн пулнă?» – ыйтрăм хирĕç килекен çынсенчен. Чӳречерен пĕчĕк ача тухса ӳкнине пĕлсен пăлхансах ӳкрĕм... «Васкавлă пулăшу» машинин сирена сасси хăлхара чылайччен янăраса тăчĕ ун чухне. Ачана больницăна тӳрех илсе кайрĕç, анчах та каярах йывăр суранĕсене пула пĕчĕкскерĕн пурнăçне çăлма май килменнине пĕлтĕм».*

Шăпăрлансем кантăкран ӳкрине чылай чухне йывăр суранланаççĕ, çакă вилĕмпе те вĕçленет.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

СĂМАХ МАЙ
Кăçал шăрăх тăнă июнь уйăхĕн 5-11-мĕшĕсенче республикăра виçĕ ача уçă кантăкран тухса ӳкнĕ, вĕсенчен пĕри вилнĕ.

Ачана инкекрен сыхлама яланах асра тытăр!

- **Кантăка уçă ан хăварăр. Çеккунтлăха пăрăнни те инкек патне çитерме пултарать.**
- **Москит сеткăсене чӳречене хӳтĕлекен хатĕрсемсĕр усă курмалла мар. Ача хăйĕн умĕнчи чăрмава курса ун çине тайăнать, сеткăпа пĕрлех тухса ӳкме пултарать.**
- **Ачасене чӳрече е кантăк алăксем патĕнче сăнавсăр хăвармалла мар.**
- **Чӳрече çумĕнче сĕтел-пукан ан лартăр.**
- **Ачасене кантăк çумĕнче ларакан кровать е урăх сĕтел-пукан çинче сикме-выляма ирĕк памалла мар.**
- **Хĕвел кĕресрен хӳтĕлекен хатĕрсене, жалюзие е рулонлă чӳрече каррисене кантраллисене тата сăнчăрлисене ан суйлăр. Чӳрече сакки çинчи ача вĕсенче чăлханса ларса пăвăнма пултарать.**
- **Чӳречене ача хăй тĕллĕн ан уçтăр тесен вĕсем çине блокиратăрсем лартмалла.**

• ЗАКОН ÇĔНĔЛĔХĔСЕМ

▶ Çĕршыв правительстви транспорт объекчĕсем çинче терроризмпа кĕрешессине вăйлатма административлă кодекса тӳрлетӳсем кĕртнĕ – пĕлтерет «Право.ру».

▶ РФ ШĔМĕ хатĕрленĕ документ КоАПăн 23.3 тата 28.3 статйисенчи пайсене улăштарса шалти ĕçсен органĕсенче вăй хуракансен должноç полномочийĕсене анлăлатать. Полици сотрудникĕсене малашне транспорт хăрушсăрлăхĕпе усă курас йĕркене пăснă тĕслĕхсемпе пуçарнă административлă ĕçсене пăхса тухма ирĕк парĕç. Енчен те закон проектне ырласан, полици сотрудникĕсем хупă транспорт объекчĕсене законсăр майпа кĕрсе кайнисем тĕлĕшĕпе протоколсем çырма тата ĕç материалĕсене суда ярса пама пултараççĕ. Вĕсене хума ирĕк пама пултаракан чи пĕчĕк штаф виçи 3-5 пин тенкĕпе танлашать.

▶ Çак уйăхран 7-11 çулсенчи ачасене транспорт хатĕрĕн хыçалти ларкăчĕ çинче хăрушсăрлăх пиçиххипе çакланса автокреслосăрах илсе çӳреме ирĕк параççĕ. 12 çул тултарман ача вара çăмăл машинăн малти ларкăчĕ çинче автокресло кăна ларса пыма пултарать. Унччен маларах РФ премьер-министрĕ Д. Медведев çичĕ çултан кĕçĕнрех ачасене машинăра хăйсем тĕллĕн хупса хăварнăшăн яваплăха çирĕплетесси çинчен калакан хушăва алă пуснине аса илтерни вырăнлă.

▶ ОСАГО улшăнăвĕсене пырса тивекен закона та тӳрлетӳсем кĕртнĕ. Çул çинчи пĕчĕк аварисем тĕлĕшпе çырнă европротокол тăрăх тӳлевсен виçи ӳсĕ. Улшăнусене «Транспорт хатĕрĕн хуçи граждан пурлăхне тивĕçлĕ ĕçкепе страхлани çинчен» законри 11.1 статьяна кĕртеççĕ. Халĕ европротоколпа саплаштаракан тӳлевĕн чи пысăк виçи 50 пин тенкĕрен ытла мар (эксперимента хутшăнакан Мускавра, Петербургра тата çак хуласен çумĕнче лимит 400 пин тенкĕ чухлĕ пулнине палăртни вырăнлă). Паянхи кун ОСАГОпа вăтам тӳлев 65 пин тенкĕпе танлашать, сиен виçине вара чылай чухне вырăнта палăртма та йывăр, закон проекчĕ çак виçене 100 пин тенкĕ таран ӳстерме сĕнет.

Таван Ен

Учредитель (соучредители): Министерство информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики, Автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция газеты «Таван Ен» Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике - Чувашии 05 октября 2012 г. **ПИ № ТУ 21-00231.**

Газета распространяется в Чебоксарском районе, гг. Чебоксары и Новочебоксарск, а также в райцентрах Чувашской Республики

Выходит по пятницам на чувашском языке, с подачей некоторых материалов на русском.

Гонорар выплачивается только за материалы, написанные по заказу редакции. Рукописи, фотографии, рисунки не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. Редакция не вступаетв переписку с читателями. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

При подготовке материалов использованы информация и фотографии с сайта администрации Чебоксарского района, официального портала органов власти Чувашии www.cap.ru, и сайта «Российской газеты».

Подписной индекс газеты **54820**

Адрес редакции и издателя: **АУ «Редакция газеты «Таван Ен» Мининформполитики Чувашии**
429500, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
E-mail: **tavan-en21@yandex.ru** Сайт: **www.tavanen.ru**
Факс: 8(83540) **2-12-59, 8(8352) 45-54-20**

Тел. для справок – 8 (83540) **2-12-59**. | ***Отделы:*** новостей и общественной жизни – **8 (83540) 2-21-88,** | местного самоуправления, социальной политики и организационно-массовой работы – **8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 45-54-20,** | рекламы и подписки – **8 (83540) 2-12-59,** | бухгалтерия – **8 (8352) 45-54-20,** | гл. редактор – **8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 45-54-22.**

Прием объявлений и рекламы, подписка с 8.00 до 17.00
E-mail: **tavanen@mail.ru** **Тел.:** 8(83540) **2-12-59**

И.о. главного редактора **В.А. ВЫШИНСКАЯ**
Дежурный по номеру **А.В. ТИХОНОВА**

Материалы, обозначенные знаком Ⓟ, а также в рубриках «Саламлатпăр», «Тав тăватпăр», публикуются на платной основе.
© Перепечатка или иное воспроизведение материалов без письменного разрешения редакции запрещена.

Печать офсетная.
Объем 3,0 печ. л.
Время подписания в печать: по графику – 18.00, фактически – 17.30 06.07.2017 г.
Дата выхода в свет: 07.07.2017 г.

Тираж **2641 экз.**
Заказ № 2255
Номер отпечатан в ОАО «ИПК Чувашия» 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

Цена свободная

Чи паха парне мĕн хак?

▶уйрăм çынсемшĕн «Тăван Енри» салам хакĕ **500** тенкĕ; ▶предприятиорганизацисемшĕн, юридици сăпачĕсемшĕн **600** тенкĕ; ▶сăн ӳкерчĕк **100** тенкĕ.

• КАЛЕНДАРЬТИ КУН

Суйласа илнишĕн ӳкĕнмест

Р. Иванован почта сумки çăмăл мар.

Роза И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика университетне пĕтернĕ, Шупашкарти 62-мĕш номерлĕ шкулта чăваш чĕлхи учителĕ пулса ĕçлет, çав вăхăтрах Тракторсем тăвакансен Культура керменĕнчи «Çăлкуç» халăх театрĕнче те выляма вăхăт тупать. Петр ывăлĕ электромеханика техникумне пĕтернĕ, хĕсметре те пулнă, халĕ Шупашкарта хăйĕн специальнăçĕпе ĕçлет. Кĕçĕнни Иван Ишекри вăтам шкулта кăçал 9 класа ăнăçлă вĕренсе пĕтерчĕ.

Măшăрĕ Анатолий Ишекри АЗС-ра вунă çул ытла заправщикре тăрăшать.

Рена Геннадьевна Ишекри почта уйрăмĕнче 2005 çултанпа ĕçлет. Почта уйрăмĕ çĕнĕ çурта куçнă хыççăн ĕç условийĕсем лайăхланни ĕçлес кăмăла çĕкленине палăртать вăл. Ĕç укçи пысăках мар пулсан та çынсемпе курса калаçма май пурри паха. «Мĕн пурнăç тăршшĕпех халăхпа хутшăнса ĕçленĕ те пĕртте килте ларас килмест, – ăшшăн пуплет почтальон, – хамăр уйрăм пуçлăхĕ Эльвира Геннадьевна Таланцева та яланах ăшă кăмăллă, ĕçлес хавхаланăва коллективри туслăх та ӳстерет».

Вырăнти халăх «Тăван Ен» хаçата кăмăлласах вулать. Почтальон вăл вулакан чи хапăл туса йышăнакан кăларăмсенчен пĕри пулнине пĕлтерчĕ. Тăрăшуллă ĕçчене хаçат-журнала сарас ĕçри лайăх кăтартусемшĕн Тав хучĕпе те хавхалантарнă.

ЕКАТЕРИНА ГРИГОРЬЕВА,
МĂН МАРКА ЯЛĔ

Кашни çулах июлĕн иккĕмĕш вырсарникунĕнче Почта ĕçченĕсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ. Ку пулăма официаллă майпа Раççей Президенчĕн 1994 çулхи май уйăхĕнчи йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ. Çак çулах уява почтальонсем пуçласа паллă тунă.

«Çумăр çăвать-и е çил-тăман,

Телейлĕ çул пултăр саншăн ялан…» – сунас килет Ишекри почта уйрăмĕнче тăрăшакан Рена Геннадьевна Иванова почтальонкăна. Икĕ яла, Мăн Маркапа Малтикаса, нумай çул хушши хаçат-журналпа тивĕçтерсе тăрать вăл. Пурнăç çулĕ унăн тӳрех почта ĕçĕпе çыхăнман-ха.

Рена Муркаш районĕнчи Хорнкасси ялĕнче 1965 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче сакăр ачаллă çемьере кун çути курнă. Паянхи куна икĕ пиччĕшĕ пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайнă, ултă аппăшĕ-йăмăкĕ çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче тĕпленсе пурăнаççĕ. Йăмăкĕ 6 уйăхра чухне ашшĕ сарăмсăр çĕре кĕрет вĕсен. Амăшĕн пĕчченех ачисене ура çине тăратма тивет. Çĕнĕ пӳрт те хăпартнă, хуралтă тавраш не те çавăрнă. «Ӳснĕ чух аннене кулянтарман эпир», – аса илет паян Рена Геннадьевна. Юськассинчи вăтам шкула пĕтерсен пурнăç хĕре Вăрнарти совхоз-техникума илсе çитерет. Унта агрономи уйрăмне вĕренсе пĕтерсен 1986 çулта Шупашкар районĕнчи «Слава» совхоза направленипе ĕçлеме яраççĕ. Малтанах 4-мĕш уйрăмра бригадир пулăшуçинче, унтан Ишекри теплицăра бригадирта ĕçлет. Ун чухне, совхоз аталаннă вăхăтра, кашни кун хăяр, помидор икшер машина та ăсатнă, купăста калчи çитĕнтернĕ.

Çатра Марка каччипе Анатолий Андриянович Иванопа (вăл водительте вăй хунă) 1991 çулта туй кĕрлеттерсе пĕр çемье çавăрнă. Хунямăшĕпе çичĕ çул, хуняшшĕпе 17 çул пĕрле пурăнса пĕр сивĕ сăмах илтнине ас тумасть Çатра Марка кинĕ. Çыпăçуллă алă-ураллă та çепĕç чĕлхеллĕскерпе ним пайламалли те тупăнман ватăсен. Сăмах май, Андриян Иванович – вăрçă ветеранĕ, наградăсем кăкăр туллиех пулнă унăн. Халĕ вĕсене ачисемпе мăнукĕсем типтерлĕн упраççĕ.

Çулталăкран хĕрĕ Роза çут тĕнчене килет Ивановсен, унтан Рена мăшăрне Петрпа Иван ывăлсем парнелет.

САЛАМЛАТПĂР!

Чаканар ялĕнче пурăнакан, Кӳкеçри 5-мĕш номерлĕ налог инспекцийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан **Надежда Фадеевна ДЕМИДОВĂНА** 55 çулхи юбилейпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, çемьере телей, ĕçре ăнăçу сунатпăр.

■ *Кипеккассинче Константиновсен çемйинче çуралса ӳснĕ ачисемпе мăшăрĕсем тата ашшĕ.*

07-10

• ПĔТĔМЛЕТӲ

85 ÇУЛ ХАЛĂХПА ПĔРЛЕ! Çакăн пек лозугпа иртет пирĕн ку çулталăк. Çавра датăна халаллана **ВИКТОРИНА** ыйтăвĕсене эпир «Тăван Ен» хаçатăн июнь уйăхĕн 23-мĕш номерĕнче пичетленĕччĕ. Пур ыйтăва та Николай Смирнов (Атăльял) тĕп-тĕрĕс хуравларĕ. Хаçат юбилейне халаллана савăнăçлă уявра ăна асăнмалăх парнепе чыслатпăр. Тĕрĕс хуравсем вара çапларах:

1) Шупашкар тата Çĕрпӳ районĕсен «Путь Октября» пĕрлехи хаçачĕ тухма пуçласан.

2) Эрнере икĕ хут тăваткун полосапа, 8500 тиражпа тухса тăнă.

3) Пурнăçра тĕл пулакан çитменлĕхсемпе, пăтăрмахсемпе, дисциплинăна пăсакансемпе çивĕч кĕрешме.

4) 1991 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче.

5) 2010 çулта чи пĕрремĕш номертен пуçласа вăл «Тăван Ен» пек тухма пуçлать, тепĕр майлă каласан эрнере пĕрре 12 страницăпа пичетленет. Унсăр пуçне малтан «Кугеси плюс», каярахпа «Причебоксарье» ятсемпе район хаçачĕ сумĕнче вырăсла вулакансем валли уйрăм хаçат тухма пуçлать.

www.meteorf.ru сайт пĕлтернĕ тăрăх

ÇАНТАЛĂК

Эрнекун ...Июль, 7	+18°	+11°
Шăматкун ...Июль, 8	+15 °	+9°
Вырсарникун ...Июль, 9	+17 °	+10°

Июль	10	Тунтикун.....	+17°
Июль	11	Ытларикун	+20°
Июль	12	Юнкун	+23°
Июль	13	Кĕçнерникун.....	+23°

валюта курсĕ 07.07.2017

$ 60,24
€ 68,38

Шупашкартан – Ĕренпур тăрăхне

• АЯКРИ ТĂВАН

Июлĕн 2-мĕшĕнче Чăваш çамрăкĕсен «Сувар» пĕрлешĕвĕн хисеплĕ элтепери Олег Цыпленков ертсе пыракан 47 хĕрпе каччăран тăракан ушкăн черетлĕ 28-мĕш чун çӳревне тухрĕ.

Хастарсен йышĕнче – Хусанти Евгений Турхан çыравçă, Чаканарти Николай Фомиряков тавраплăçĕ мăшăрĕпе Иринăпа, ЧР вĕрентĕвĕн Хисеплĕ ĕçченĕ Галина Николаева, Светлана Мерчен юрăç, Дима Куруленко флейтист ... 47 чун çӳревçĕрен 8-шĕ Шупашкар районĕнчен пулчĕç: маларах асăннă Фомиряковсен çемйи, Кӳкеçри тĕп культура çуртĕ çумĕнчи Наталья Арсентьева ертсе пыракан «Телей» фольклор ушкăнне çӳрекен 75-ри Тамара Надольскаяпа Галина Федорова, Чăваш Халăх сайчĕн тĕп редакторĕ Николай Плотников та çак йĕркесен авторĕ.

Инçе çула кĕскетсе Ĕренпур чăвашĕсем патне çитесси пирĕн тĕллев пулчĕ. Чун çӳревçĕсем Чăваш, Тутар Республикисен, Чĕмпĕр, Самар облаçĕсен çĕрĕсемпе 700 км хыça хăварса каçалапа Ĕренпур облаçĕнчи Грачевское районĕнчи Çирĕклĕ Ток ялне çитрĕç. Чĕмпĕр хулинче Николай Кондрашкин çыравçă-скульпторпа Пушкăрт Республикинчен килнĕ Алена Савельева (Сильпи) юрăç тата унăн ывăлĕ, 6 çулти пĕчĕк çул çӳревçĕ Савелий, пирĕн йыша хутшăнчĕç. Ял тăрăх пуçлăхĕ Николай Рыбаков çăкăр-тăварпа, сăрапа кĕтсе илчĕ. Ял историйĕпе тата аваллăха сăнласа паракан пĕчĕк вакунри стендпа паллаштарчĕ. Ăна уявсене тата мероприятисене илсе çӳреççĕ. Шалта кровать, сăпка, çип тĕртмелли станок, кăмака т.ыт. япала пур. Çирĕклĕ Ток ялĕ 1709 çулта пуçланса кайнă. «Ял тăрăхне 2 ял – Андреевка тата Çирĕклĕ Ток кĕрет. Вырăнти депутатсем 8-шĕ те чăваш. Çирĕклĕ Токри 250 килçуртра пĕтĕмпе тенĕ пекех чăвашсем пурăнаççĕ. Ялти шкулта чăваш чĕлхине вĕрентеççĕ. Çĕнĕ çуртсем лартатпăр, асфальт çул юсатпăр. Ялта 17 фермер. Măшăрпа пĕрле фермер хуçалăхĕнче тăрăшатăп. 400 га çинче тырă, хĕвелçаврăнăш çитĕнтеретпĕр. Хуçалăхра 4 трактор, комбайн, тăваттăн пулăшса пыраççĕ», – пĕлтерчĕ ял тăрăх пуçлăхĕ Николай Рыбаков. Ялта кашни килте тенĕ пекех трактор пур. Фермерсем çĕр çитменнипе юнашар ялсенчи лаптăксемпе усă кураççĕ. Вырăнти депутат, Ĕç ветеранĕ Петр Федотов пĕлтернĕ тăрăх, чăвашсем Самлай, Хаминка, Строяжкин тата Калекин ялĕсенче те пурăнаççĕ. Культура çуртне 1961 çулта хăпартнă.

Тĕл пулу каçĕ ялăн культура çуртĕнче иртрĕ. Виçĕм çул та пулнă иккен кунта пирĕн çул çӳрев ушкăнĕ. Чи малтанах Олег Цыпленков çул çӳрев çинчен каласа кăтартрĕ, авалхи йăлапа ял тăрăх пуçлăхне кĕпе тăхăнтартрĕ, парне валеçрĕ. Уяв программине ЧР вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ Галина Николаева ертсе пычĕ. Концерта вырăнти Александр Максимов ертсе пыракан «Нарспи» фольклор ушкăнĕ авалхи чăваш юррисемпе пуçларĕ. Чаканарти Николайпа Ирина Фомиряковсем шăхличĕпе каласа юрă-кĕвĕ шăрантарчĕç. Муркаш районĕнчи Москакассинчи культура çурчĕ çумĕнчи Ирина Петрова ертсе пыракан «Калинка» ташă тата Кӳкеçри Наталья Арсентьевăн «Телей» пултарулăх ушкăнĕсем, Пушкăрт Республикинчи Алена Савельева (Сильпи), Светлана Иванова (Мерчен), Тутарстанри Ирина Ягодкина хăйсен юрри-ташшипе пухăннисен кăмăлне çĕклерĕç. Владимир Болгарский тата Олег Цыпленков Петĕр Хусанкай сăввисене аса илчĕç. Ирина Раевскаяпа Андрей Соснин та сăвăсем вуларĕç. Дмитрий Куруленко флейтăпа музыка шăрантарчĕ. Ташă ушкăнĕсем чăваш, тутар, удмурт, пушкăрт, иран, вырăс çар ташшисемпе тыткăнларĕç. Артистсемпе пĕрле ялхалăхĕ те юрласа-ташласа савăнчĕ. Концерт хыççăн ял çыннисем хăнасене килĕрен йышăнчĕç, çул çинчен мунча кĕртрĕç, сĕтел хатĕрлерĕç. Эпир, Дмитрий Куруленко, Шупашкарти Наталья Соснинапа унăн ывăлĕ Андрей, Патăръел районĕнчи çамрăк сăвăç 17-ри Николай Еллин Павелпа Любовь Максимовсем патĕнче хăнара пултăмăр. Тарават кил хуçисене хамăн «Аваллăхран пуласлăха» кĕнекене парнелерĕм. Каннă хыççăн малалла çула тухрăмăр, вăл вара малалла Казахстан еннелле выртрĕ.

НИКОЛАЙ СМИРНОВ, АТĂЛЪЯЛ